с. п. петров

Инв. № 256
31-218

# партти ҫӑваш орканисатсин ӗҫӗсем пирки ҫулхула крайкомӗ решшенисем ҫинҫен

ҫӑвашсен патшалӑх истаттӗлстви
шупашкар
1931

Ç. П. Петров

# Партти ђăваш
## орканисатси ĕçĕсем пирки ђулхула крайкомĕ йышăннă решшенисем çинђен

Ђăвашсен
Патшалăх истаттĕлстви

ШУПАШКАР
1931

Послано в производство 21-X-31
Подписано к печати 2-XI-31

Отпечатано в типографии № 1 Чувашгиза,
Г. Чебоксары, Канашская 16.

Уп. Чувашлита № 1771. Об'ем 1,25 п. л.

Ст. ф. Б. 100 x 145. Тираж 5100 экз,

**ПСК(п) Парттин Ђăваш опкомĕн ответлă çекреттарĕ Ç. П. Петров Шупашкар хулинђи партти орканисатсин пухăвĕнђе 1931 çулхи авкустăн 25—26-мĕшĕнђе тунă токлат.**

## ПСК(п) Партти Ђулхула Крайкомĕн полђшевикла решшенийĕсен хăваđĕ.

Йулташсем! Партти Ђулхула Крайкомĕ пирĕн парторканисатсин токлатне, йатарласа йанă прикатă урлă орканисатси ĕçĕсене тĕплĕн, тарăн илсе тĕрĕслесе тухнă хыççăн итлени, тата партти Крайкомĕ пирĕн орканисатсин токлаđĕ тăрăх полђшевикла решшенисем йышшăнни— пур Ђăваш орканисатсишĕн те, пĕтĕм ђăваш ĕçхалăхĕшĕн те калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен, пĕр йенђен: пирĕн партоканисатси 1920-мĕш çулта хăй орканисатсиленнĕренпех парттин çӳлти йертсе пыракан орканисатсийĕ умĕнђе нихăçан та ĕççĕне пур йенђен те çутатса паракан отђотлă токлат туман; тепĕр йенђен: ПСК(п) Партти Крайкомĕн пӳровĕ пирĕн токлата итлени

тата Крайком прикати пирĕн ĕçсене иртнĕ 10 çулĕпех çавăрса илсе тĕпҍесе тухса пĕтĕçтерни—сотсиалисăм ĕçĕ пĕтĕм Совет сойусĕпе те, Ҍăваш респуплĕкĕнҍе те фронт тăрăшшĕпех сарăлса пынă тапхăрта пулҍĕ, тата епĕр хаљ сотсиалисăм строиттĕлствин иккĕмĕш пилĕк çуллăх планне тăвас умĕнҍе тăратпăр.

Крайком комиççийĕ пирĕн ĕçсене тĕрĕслесе тухни çинҍен пур йенҍен те туллин палăртса тăратнă маттерийалсем, партти Крайкомĕн пўровĕ пирĕн токлатпа комиççи сотоклатне питĕ тинкĕрсе тĕплĕн итлени Крайком пўровĕ пирĕн парторканисатси ĕçĕсĕмпе ларутăруне, тата ҍăваш çĕршывĕнҍе сотсиалисăм строиттĕлстви мĕнле пынине тĕрĕссĕн пур йенҍен таран илсе хăйĕн пољшевикла палла решшенине йышăнма май паҍĕ.

Пирĕн умра хаљ пысăк сатаҍ тăрать. Вăл—Крайком решшенисене пурнăçа пољшевикла хастарлăхпа кĕртсе пырасси, сотсиалисăм строиттĕлствин хуçалăхпа куљттур фронҍĕсенҍе пулнă прорывсене пĕтĕмпех пĕтерсе çитересси, парттин крайком решшени тавра пур совет опҍăлăхне мопилисатсилесси.

Партти Крайри комиттеҍĕ пирĕн токлата питĕ пысăк вырăна хуҍĕ. Крайри

комиттет пирĕн органисатсине тĕрĕслесе пăхнипе пирĕн токлата итленĕ тăрăх епĕр парторганисатси ђăмăртаннăранпа çак 10 çул ушшинђе, пуринђен ытла Ђулхула крайне кĕнĕреппе респуплĕк мĕнле çитĕнӳсем тунине тĕплĕн тĕрĕслесе тухрĕ.

Епĕр çак иртнĕ-икĕ çул хушшинђе Ђулхула крайĕнђи пролеттариат йертсе пынипе, парттин пољшевикла çулйĕрне ленинла натси политтĕкне тĕрĕссĕн пурнăça кĕртсе пынипе питé пысăк ĕçсем, калама çук пысăк çитĕнӳсем турăмăр. Çавăнпа та Крайком пӳровĕ пирĕн токлата итлесе сӳтсе йавнă хыççăн парторганисатси ларутăрăвĕпе унăн ĕçĕсене çителĕклĕ, тесе каларĕ хăйĕн решшенинђе.

Ђăваш органисатсинђе темиçе çул хушши палăрса тăнă сылтăм оппортунисла теорине епĕр хаљ пуçĕпех çапса салатрăмăр. Партти Тĕпкомĕпе Ђулхула Крайкомĕ йертсе пынипе пољшевикла хайарлăхпа партти тĕп çулйĕрĕшĕн кĕрешсе, ĕçри пур тĕрлĕ оппортунисăмпа тата унпа килĕштерекенсене хирĕç вирлĕн çапăçса пытăмăр. Кун çинђен Крайком хăйĕн ресољутсинђе çапла палăртса пађé:

«Ђăваш оплăçéнђи парторганисатси ПСК(п)П Опкомĕ йертсе пынипе, парт-

тин тĕп çулйĕрĕшĕн пољшевикла кĕрешнĕ никĕс çинђе, ленинла натси политтĕкне тĕрĕссĕн, йĕркеллĕн пурнăçа кĕртсе пынипе хăйĕн ретне итейă тĕлĕшĕнђен тĕреклентерне, тата респуплĕкĕн екконоѣмĕкне сотсиалисăмла урăхлантарса çĕнетсе йарас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунă.

Парторканисатси „ăслăлăхĕпе ӳтпӳ тĕлĕшĕнђен ђăваш халăхĕ кайалла кайса пĕтсе пырат" (елменшђĕнĕ), „ЂАССР-ĕн малалла каймалли майсем çук" текен сылтăм оппортунисла теорисене тĕпĕпех çĕмĕрсе тăкнă; çав вăхăтрах пур тĕрлĕ ĕçре палăракан „сулахай" оппортунисăма хирĕç, «сулахай» пăрăнђăксем тăваканѣсемпе, тата сулăнђăксемпе килĕштерсе ĕçлекенсене хирĕç татăклах кĕрешсе пынă»,—тесе каланă.

Крайком хăйĕн решшенинђе: Ђăваш парторканисатсийĕ Опкомпа Крайком йертсе пынă май, партти шалти темократтине тата самокриттĕке сарса пынипе орканисатсийе сыватас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă, тесе уйрăмăнах палăртат. Çакăн пек тĕп хак пађĕ Парттин Крайкомĕ пирĕн çамрăк парторканисатсин ĕçĕсене. Пирĕн орканисатси ĕçĕсене çӳлти парторкăнсем кун пек хаклани халиђђен пулман. 1926-мĕш çулђђен ПСК(п) Парт-

тин Тёпкомĕ те пирĕн орканисатси ĕçĕсене пĕр хут çеç тĕрĕслемен, анђах вăл тĕрĕслӳ ĕçĕсем орканисатсин ђирĕсене палăртассипе çыхăнса тăнă. Çавăнпа та, ПСК п) Парттин Ђулхула крайком пӳровĕ йышăннă решшени пирĕн орканисатсишĕн—ђăваш çĕршывĕн сотсиалисăмла строиттĕлствине малалла та вăйлăн сарса пыма пулăшакан историллĕ паллă решшени.

## Партти строиттĕлствин ыйтăвĕсем.

Пирĕн парторканисатси хăй хăçан орканисатсиленĕ йенђен те, хăйĕн составĕпе те çамрăк орканисатси. Револђутсиђђен Ђăваш респуплĕкĕн халђхи çĕршывĕ çинђе полђшевиксен вăрттăн ĕçлекен орканисатсийĕ кăна мар, унăн уйрăм ђленĕсем те пулман. 1617-мĕш çулхи револђутси хыççăн çеç, уйрăмах октапĕр уйăхĕнђе пулнă револђутси хыççăн, парторканисатсисем ђăмăртанма пуçлаççĕ, вĕсем Хусан кĕпĕрнинђи парторканисатсин пайĕ пулса ĕçленĕ. Кунпа пĕрлех феврађ уйăхĕнђи револђутси хыççăн ђăвашсем хушшинђе ессерсен орканисатси вăйлăн ӳсме пуçлат. Йулашкинђен вĕсен хăшпĕр ђленĕсем комуниссен парттине куçаççĕ.

Ҫăвашсен оплăҫри парторканисатси 1920-мĕш ҫултанпа, автономи йĕркеленсен, ҫăмăртанса ĕҫлеме тытăннă.

Респуплĕкри ĕҫхалăхĕн екекономĕкĕпе куљттурлăхĕ кайра тăнă пирки ҫамрăк парторканисатсин ĕҫ ўсловисем питĕ йăвăр пулнă, пролеттари катăрĕ пулман. Ҫавăнпа та ăна ĕҫлесе тăма ҫăмăлах пулман. Профсойуссем те ҫăмăртанман пулнă. Парттире тăракансем куљттурлăхĕпе политтĕк пĕлўвĕ те питĕ кайра тăнă. Ҫак йапаласем пурте хуҫалăхпа куљттурлăх строиттĕлствине йертсе пыма йăвăр условисем тунă.

Йертсе пымалли вырăнсенҫе ҫас-ҫасах малтан ессерсен орканисатсинҫе тăнă парттийтсăсем ĕҫленĕ. Вĕсĕм куљттурлăхпа политтĕк пĕлўвĕ йенҫен ыттисенҫен ҫўлтерехре тăнă. Мĕншĕн тесен вĕсенҫен ҫылайĕшĕ уҫитлĕ пулнăскерсем пулнă.

Совет аппаратне натси интелекентсине: пупран тухнăскерсене, пуп ҫемйин сыннисене, тата ĕлĕкхи ҫинавнĕксене ĕҫлеме хутшăнтарнă. Натси интелекентсинҫе пуринҫен ытла ĕлĕкхи Ҫĕмпĕрти ҫăваш шкулĕнҫен вĕренсе тухнă уҫитлĕсемпе пупсем тăнă.

Тепĕр йенҫен, сотсиаллă сăй йенҫен пăхсан, натси интелекентсийĕ пуринҫен

ыла вăтам, тата пуйан-кулакла хресђен сăнĕнђен тухнă пулнă. Рапођђисенђен, патраксемпе ђухăнсенђен тухнă куљттурлă вăйпа интелекентси револђутсиђђен пирĕн хушăра питĕ сахал пулнă. Çавăнпа та вак пуршуаллă çтиххийă (вăй), пролеттариллĕ катăр çукки, совет аппараҭĕ йурăхсăр етемсемпе çўпĕленни, парттире тăракансен тĕп массин куљттурлă тата политтĕкле пĕлўвĕ сахал пулни—çаксем пурте орканисатсине тĕрлĕ ђирпе ђирлеме çăмăллатнă тата парттиллĕ çивĕђ сисĕмлĕхе мăкатса тăнă.

Вак пуршуаллă, натсиллĕ темократти йухăмĕ питĕ вăйлă пулнă. Кун пирки сотсиалисăм строиттĕлствине йертсе пынă çĕрте тепĕр ђухне парттине хирĕçлине уççăнах курăнакан кăтартса панă.

Çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекенсен 1920-мĕш çулта пулса иртнĕ курсă-сйесĕнђе парттире тăракан пĕр çын хăй токлатĕнђе ак çапла каланă:

„Револђутси пирĕнтен пăрăнса иртсе кайаҭ, йертсе пыракансем епĕр,—интелекентсем,—мар, епĕр йертсе пымаллисем йертсе пырăнакансем пулса ĕçлетпĕр, епĕр хамăр йертсе пырассине ыттисен аллине панă. Еçсем пиплире каланă пекех: асли хăй аслăлăхне кĕçĕн шăлнĕне

йасмăк йашкилле сутнă, тенĕ пек пулса тăнă"—тенĕ.

Акă йепле йертсе пыракансенђен хăшпĕрисем натси интелекентсипе çирĕп хутшăнса ĕçленĕ.

Автономи ђăмăртанса ĕçлеме пуçланăранпа 1926-мĕш çула çитиђђенех орканисатсире пĕрмайах склоккă пынă, пĕр çекреттар те тепĕр конферентси пулиђђен ĕçлесе пурăнайман.

1926-мĕш çулăн ийуђ уйĕхĕнђе йулашки склоккă хыççăн тухса тăнă ыйтусене пăхса тухма пухăннă Опкомĕн 4-мĕш пленăмĕнђе Опкомăн çекреттарĕ пулса ĕçленĕ Алексçейĕв йулташ парторканисатсин 10-мĕш конферентси умĕнхи 1925-мĕш çулĕнђи ларутăрувĕ çинђен çапла каланă: „Орканисатсире вăл вăхăтра пĕрмайах хирĕçӳпе çапăçу пыђĕ; орканисатсине утел тытăмĕ пек пайласа тăнă, кашни хăйĕн утел кнеçĕ пулнă, вĕсем пурте Опкомра пуç пулса ĕçлесшĕн хапсăннă. Пĕрпĕринпе ушкăнланса харкашнă пирки çирĕппĕн йертсе пырасси пулман. Ушкăнланса хăйĕн вађђи вăй пухас тесе, ушкăна йертсе пыракансем хăйĕн ĕретне варланнă таса мар, тĕрексĕр, шанђăксăр етемсене илсе, вĕсене пытарса тăнă, хађ те (1926-мĕш

çулта) çавăн пекех. Ку çеç мар, пленăмра та политтĕкле вçаткăсем панă. Çак условисем хушшинҕе, çакăн пек никĕс çинҕе пулса иртрĕ парттин 10-мĕш конферентсийĕ. Кашни ушкăн хăйĕн çекреттарне сĕнме хатĕрленҕĕ. Конферентси умĕн 3 ушкăн çехҕĕ, конферентси пынă май 4-мĕш сиксе тухрĕ, ăна Краснов йертсе пынă. Вăл ушкăна вара Рокоçинтски йулташ „тискер“ тесе йат паҕĕ“. Ак çакă сăмахсем ĕнтĕ парторканисатси 1921-мĕшпе 1926-мĕш çулсем хушшинҕи ĕççем мĕнле пыни çинҕен аван кăтартаççĕ.

Партти Тĕп контроҕ комиççи 1924-мĕш çулта „происвотствă йаҕейккисенҕе мар тăракан парттин ҕленĕсемпе кăнтитаҕĕсене тĕрĕслекен итоксем“ çинҕен çырса кăларнă кĕнекере, 88-мĕш странитсăра: „Натсиллĕ орканисатсисенҕен аслă вырăна ларасшăн хапсăнса кĕрешнисене кăтартакан тĕслĕхсем. Ҕăваш орканисатсинҕе нумай пулнă, унта кун пек йапаласем, тата аслă вырăна ларасшăн сын йатне йама тăрăшнисем пĕрмайах пулса пыракан ĕççем вырăнĕнҕе шутланаççĕ»—тесе çырнă.

1928-мĕш çулта Опком пленăмĕ Тĕп контроҕ комиççи ҕленĕ Викмăн йулташ

токлаҫё тăрăх орканисатсин ун ҫухнех
ĕçĕсене ҫакăн пек хакласа каларĕ:

«Ҫăваш орканисатсинҫе пилĕк ҫу
хушши (1921—1926 ҫҫ.) пĕр ҫарăнмасă
пынă склоккăпа ушкăнланса пĕр-пĕрин
пе кĕрешни, пуринҫен ытла вăл опläçр
ҫенттăрта йертсе пыракансем хушшинҫ
пынă пулнă, йулашкинҫен орканисатсин
ытла та тарăн ҫирлеттерсе йанă. Ушкăн
сем хушшинҫе нимĕнле притсĕпле уйрăм
лăхсем пулманни, кашни ушкăн ҫийел
тухса влаҫа кĕрсе ларасшăн пĕр-пĕрин
пе кĕрешни, йулашкинҫен тата ушкăн
ланса склоккăллă ĕç туса йанăшĕн ни
мĕнле ответ та тытманни орканисатс
ҫирне тарăнлатса йанă, вăл ҫире партт
масси хушшине, партти йаҫейккисе
патне ҫитернĕ. Ҫаксем пурте партти
11-мĕш конферентси хыççăн парторкан
сатсине сыватас тĕлĕшпе ĕçлеме йăвă
условисем туса хунă»,—тенĕ.

Парторканисатсин 1926—27-ш. ҫул
(теккапĕрĕн йулашки кунĕсемпе йанварĕ
пуçламĕшĕнҫе) пулса иртнĕ 11-мĕ
конферентсийе суйласа хăварнă Опко
орканисатсийе сыватса ҫитерес, унă
шалти ларутăруне тĕреклетес ĕçсе
ҪАССР-ĕн советпа куҫттур строи
тĕлтствине тата унăн хуçалăхне тĕрекле

се ăна малалла йарас ĕçсемпе пĕрле вăйлăн хатĕрленсе пурнăçа кĕртсе пымалла пулнă (Респуплĕке районласси, алăстисен ĕçне малалла йарасси, ђухăнсем хушшинђе ĕçлесси, промышлĕннăçпа йалхуçалăхне малалла йарас ĕçсем туни т. ыт. т.).

Çапах та орканисатсишĕн 11-мĕш конферентси пысăк улшăну паракан вăхăт пулса тăраť, кун хыççăн орканисатси хăйĕн ђир-ђĕрĕсене пĕтерме пуçлаť, тепĕр йенђен ку ĕç пĕрмай ўссе пыракан хăвăртлăхпа пурнăçа кĕртсе пыраť.

Опкома пĕтĕм парторканисатси умĕнђе сотсиалисăмла строиттĕлства пурнăça кĕртсе пырассипе пĕрле склоккăна тата унăн йулашкисене пĕтĕмĕшпех пĕтересси—тĕп сатађ вырăнђе тăђĕ.

Партти Тĕпкомĕн çекреттарĕ Коççиор йулташ пире çак сатађа тĕп сатађ вырăнне хурса ĕçлеме хушрĕ.

Пирĕн орканисатси парттин Тĕпкомĕпе Крайком тата Опком йертсе пынипе çак сатађа пурнăça кĕртсе çитерђĕ, çавăнпа та хаљхи вăхăтра вăл сывă тата шухăшĕ тĕлĕшĕнђен çирĕп, вăйлă орканисатси.

Анђах склоккăна пăђах пĕтерес тĕлĕшпе питĕ пысăк йăвăрлăхсене çĕнтермелле пулђĕ. Мĕншĕн тесен çулĕ-çулĕпе склок-

кă кăларса ĕçлеме вĕреннĕ çынсем парттин çирĕп çулне ĕçе кĕртсе пынине ђасђасах уйрăм çынсен склоккăллă ĕç тесе кăтартма тăрăшнисем пулђĕç.

Ку йăвăрлăх, Опком ОКК-çин хăш-пĕр ђленĕсем, Опком пӳровĕн ђленне çитиђђенех айакран ђирсене ђĕртсе йама пулăшнă пирки тата ытларах йăвăрланађђĕ. Партти активĕ хастарлăн пĕр пулса ĕçлени çакăн пек туртăмсене вăхăтра палăртса, вĕсене çийĕнђех пĕтерсе пыма май пађĕ.

## Парторканисатсин йышĕ.

Автономи тунă вăхăтра ђăваш орканисатсинђе 938 комунис пулнă. Çак çулти ийулĕн 1-мĕш тĕлне 4.911 çын пур. Ӳсĕм 5 хут ытларах.

Склоккăсем пĕтĕм ĕçсене пăсса пынă. Парттине çĕнĕрен ђленсем кĕни ђакнă, орканисатси йышĕ каталнă, 1921-мĕш çулта орканисатси йышĕ, калăпăр, 100% пулнă тесе шутласан, 1922-мĕш çулта вăл 90%, 1923-мĕш çулта—83%, 1924-мĕш çулта—81,4% тăрса йулнă, 1925-мĕш çулта тин вăл кăштах ӳснĕ (3,5 прођђăн таран) 1926-мĕш çултанпах орканисатси йышĕ хăвăрт ӳсме пуçланă.

1931-мĕш çулта орканисатси йышĕ

нихăçанхинҫен ытларах ӳснĕ: 1070 çын илнĕ. 1931-мĕш çулти çур çулта 865 çын илнĕ.

Пирĕн партти орканисатси, унăн ҫленĕсем парттире мĕнҫул вăхăт тăни йенҫен пăхсан, пит çамрăк. Револҫутсиҫҫенрешпех парттире тăракансем мĕн пурĕ те 4 çын çеç пур, 1917-мĕш çултанпа тăракансем—13 çын, 1918—1920-мĕш çулсенҫенпе тăракансем—303 çын пур, йе вăл орканисатси йышĕн 12,1% пулаҭ. Партти орканисатси йышĕ 49 проҫҫăн 1928—31-мĕш çулсенҫе кĕнĕ парттийĕсем пулаççĕ.

Орканисатсин пĕтĕм ҫленĕсенҫен 49,4% кăнтитатсем.

Орканисатси йышĕ çакăн пек çамрăккинҫен татах йăвăрлăхсем хутшăнса тухса тăраççĕ.

Епĕр тунă токлата итленĕ хыççăн пире Крайком, парторканисатси умĕнҫи çитĕнӳсене палăртса (рапоҫҫисен ҫăмăрĕ ӳсни), Крайком хăй происвотствăри парторканисатсисене сарма, вĕсене çирĕплетме, пур совхоссенҫе, МТС-сенҫе, тата пур шултра колхоссенҫе те партти ĕçне вĕсем çине тайанса тумалли пунктсем тума хушнине епĕр пурнăçа кĕртменнине кăтартса паҫĕ.

Парттине илес тĕлĕшпе ĕçленĕ ҫух пирĕн çитменлĕхсем нумай пулаççĕ, ҫасҫасах вăл ĕçе кампанилле кăна тăватпăр, ҫылай районсенҫе парттине çĕнĕ ҫленсем илме тӳсĕмлĕ пулса, çине тăрса ĕçлени çук, сайавленисене нумайшар вăхăт тытса тăр ççĕ, хĕрарăмсене, тата комсомолĕссене, сотсиалисăм строиттĕлствине хастарлă хутшăнса ĕçлекен утарнĕк алăстисене те парттине илесси йапăх пырать.

Промышлĕннăç ӳссе пыни, колхос йухăмĕ, МТС-сем туни—çаксем пурте рапоҫҫисене, тата колхоçнĕксене те парттине кĕртме пысăк реçерв пуррине кăтартаççĕ, вăл реçервăпала усă курас пулать.

Кăнтитатсемпе ĕçлессине йапăх оркаписатсиленĕ. Вĕсемпе кашни кун йертсе пыни, вĕсене ĕçре пулăшасси, партти ĕçне хутшăнтарасси, панă ĕççене тунине тĕрĕслесси, парттиллĕ вĕренӳ ĕçне тăвасси нумай йаҫейккăсенҫе йапăх пулса пырать, вара партти ҫленне кĕме кăнтитатра тăракансене кăнтитатран ҫлена вăхăтра куçармаççĕ. Тистиплинăна çĕклессишĕн куллен кун, тӳсĕмлĕ пулса кĕрешесси йапăх пырать.

Партти активне ӳстерес, партти катă-

рёсене хатёрлес, пуррисене тепёр хут вёрентсе хатёрлес тёлёшпе ҫылай пысăк ёҫсем тунă, йертсе пыракан катăрсем тёпрен илсе натсионалсем (ҫăвашсем) пулаҫҫё. Анҫах та вăл ёҫ, партти катёрёсене кирлё таран хатёрлес тёлёшёнҫен, пёртте ҫителёклё мар. Пирёншён катăр ыйтăвё ҫи ҫивёҫ ыйту, тата ҫи хёсёк вырăн пулаť.

Крайком пире массăллă ёҫсене аванлатса рапоҫҫисене, пуринҫен ытла ҫăваш рапоҫҫисене парттине илессине вăйлатма хушрё,—Оплăҫри парторканисатси йышёнҫе происвотствăри рапоҫҫисен йышне тата малалла ўстерсе пыма хушрё. Тата парттиллё-массăллă ёҫре ҫăнахах, ёҫе ҫёнетсе йарассине пурнăҫа кёртмелле: ăна происвотствăн кёҫён сыпăкне (претпийаттири прикатă, совхос, колхос), тата пур кёҫён парторканисатсисене те питпе происвотствă сатаҫёсем йенне хытăрах ҫавăрма тăрăшмалла.

Партти вёрентўне малалла сарса пырасси, ăна аванлатасси оплăҫри парторканисатсин ёҫёнҫи пысăк сатаҫёсенҫен пёри пулаť. Партти вёрентўн пётём ёҫёсене хăйён йышё тёлёшёнҫен ҫамрăк орканисатсине Маркс-Ленин вёрентўпе хёҫпăшаллантарассишён кёрешсе тумалла.

Крайком пире, тата Крайкомăн культпропне 1932-мĕш çултан пуçласа кунта Комвус уçмалла тума хушрĕ.

## Партти тĕп çулйĕрĕшĕн кĕрешни.

Çамрăк Ђăваш орканисатси парттин тĕп çулйĕрĕнђен пăрăннисемпе, аслă патшалăх шовинисăмпе, вырăнти натсионалисăмпа тата çак пур пăрăнђăксемпе те килĕшекенсемпе кĕрешес ĕçре пысăк ĕçсем турĕ.

Пире ђăваш хуçалăхĕн, пуринђен ытла унăн йалхуçалăхĕн малашлăхне шанман теореттĕксене тăр шыв çине кăларас тĕлĕшпе нумай ĕçлеме тиврĕ.

Ку кĕрешӳ пиртен нумай вăй ыйтрĕ, вăл халĕ те ыйтатьха, мĕншĕн тесен ку теорийе тытса пыракансенђен ђылайĕшĕ ђăвашсем хушшинђе пысăк вырăнта ĕçленĕ çынсем пулђĕç.

Тепĕр йенђен, ку еорисене халђ те саракансем пур, халђ те вĕсем куленхи ĕçре, пуринђен ытла йалхуçалăхне çĕнетсе улăштарас ĕçре хăйсене палăртаççĕ.

Акă, пĕр çвертлăвĕтс, Флекăнтăв йулташ хăйĕн кăçалхи ийулĕн 29-мĕшĕнђен Антрейĕв йул. патне йанă çырăвĕнђе мĕн çыратъ: „Есĕр ĕçлекенсем пама ыйтни, паллах, тĕрĕс, анђах опеçаттĕлнă хівăрăн-

не“ мар, тата опесаттёлнă çвертлăвётсенте мар. Комвуссенђе вёренекенсем тёе лёшпе сире питё тёрёс калаççё—илёр Тутарсен Комунисла университтетёнђе йе Ђулхулари Ком. университтетра, йе йулашкинђен те пулсан Хёвелтухăçри ёçхалăхсен Ком. университтетёнђе вёренекенсене, теççё. Сире комунисла аслă шкул уçса парса питё аван тăваççё. Ку сирён „хăвăр сăнпа хăвăр майлă“ ёçлекенсем хатёрлемеллине пёлтерет“...

Флекăнттăв каланипе, пирён, партти орканисатсин хăйён темле уйрăм сăн, парттин тёп çулйёрёнђен уйăрăлса тăракан хăйён темле уйрăм çулйёре пур мён. Епёр калатпăр—пирён тёп çулйёр пёрехçех, епёр, уншён пурте кёрешетпёр, тетпёр, анђах Флекăнттăв çакна ăнланса илейместха.

Малалла Флекăнттăв çапла çырать:

„...Опйективлă пăхсан, вёт, тўрех калас пулать—Ђăваш парторканисатси, йышлăх тёлёшёнђен, вăтам пысăкăшлё претприйаттинђи йађейккă. Çёршыв пуйанлăхне кура Ђăваш респуплёкёнђе шултăра промышлённăç çапах та çитёнме пултараймасть... Никёс çук, йалхуçалăхне илсен, ку тёлёшпе вăл нихăçан та калăпăр Çурçёр Капкаспа т. ыт. ăмăртма

пултарас çук, Ђăваш респуплĕкне унăн еккономĕклĕ пултарулăхсене тата политтĕклĕ вырăнне кура ытти ђылай респуплĕксемпе оплăççем хушшинђен мала кăларса тăратни пађах тĕрĕс мар пулнă пулĕђђĕ, вăл елменĕвшђĕнă патне, анђах урăхла майпа илсе пынă пулĕђђĕ; елменĕвшђĕнă, тĕрĕссипе вăл ђăваш çĕрĕ çинђи султтан-калейĕвшђĕнă пулаť. Çапла вара, епĕ ыйтнин (хĕрлĕ професcăрсен инçтиттутне куçарасси çинђен) тивĕçлĕхĕ пурах".

Йулашкинђен Флекĕнттăв йул.: „Ну, епĕ сире кўрентертĕм пулсан йе ман çыру хыттăнрах калакан çыру пулђĕ пулсан, каçарăр" тесе çыраť.

Ђăннипе каласан, Флекĕнттăв çырăвĕ вăл ђăваш хуçалăхĕн малашлăхне шанман, епĕр тахçанах пĕлсе тăракан „теорине" çĕнĕрен сĕтĕрсе кĕртме хăтланни пулаť.

Кун пек теори пĕр Флекăнттăв пуçĕнђе çеç мар, вăл пирĕн партти орканисатсин уйрăм сыпăкĕсенђе кăна мар йăва çавăрнă, вăл—çак теори хăйĕн тымарĕсемпе вĕтĕ, вакланнă уйрăм йĕркепе пурăнакан хресђен хуçалăхĕ ăшнех кĕрсе кайаť.

Ђăваш çĕршывĕнђи хресђенсен тĕп масси патша вăхăтĕнђе икĕ йенпе пус-

мăрланнăскер, ытла та сахал çĕрпе, йалхуçалăхĕнђи нађар технĕккăпа, вĕçĕмсĕрех çителĕклĕ çитеймесĕр, пурнăç условисенђен килекен ђирсемпе асапланса пурăнса, вăтам хресђен йышĕ ђакса, йал сийленсе пынă вăхăтра хресђен йалтан хулана тарассинђен пуçне урăх нийепле çул та тупма пултарайман

„Хресђене йалтан хулана тарма мĕн хистенĕ?—Выçă пурнăçран хăрани, ĕçсĕрлĕх, йал уншăн амаçури амĕш пулни, çавăнпа вăл, мĕнле те пулсан ĕç тупас шутпа, йалтан шуйттан мăйраки çине пулин те тарма хатĕр пулнă" (Сталин Й.).

Револђутсиђђен хресђенсен тĕп массишĕн ђăваш йалĕ икĕ хут амаçури амăш пулнă.

Октăпĕр револђутси хыççăн епĕр калама çук пысăк çитĕнўсем турăмăр тата промышлĕннăçпа йалхуçалăхне малалла та ўсме питĕ пысăк шанђăксем пур.

Анђах çакăнпа пĕрлех асра тытас пулаť—йалхуçалăхĕн ўсĕмĕ пĕртен пĕр çулпа—анђах йалхуçалăхне сотсиалисăмла çĕнетсе улăштарас çулпа, колхоссен çулĕпе анђах кайма пултараť. Уйрăм хуçалăхсем ўсес пулсан та, вĕсем вĕçне çитеççĕ, вĕсем кунтан мала иртсе кайма пултараймаççĕ.

Пирĕн теореттĕксем, хресђенсен тĕп массин револђутсиђђенхи шухăшне тата халĕ кулаксен теорине палăртса, Ђăваш çĕршывĕнђи колхоссемпе совхоссен строиттĕлствине хирĕç пыраççĕ. Темиçе çул тăршшĕ вĕсем, натси политтĕкне пăсса, ђенттăр укçа памасŤ, пирĕн йалхуçалăхĕ нихăçан та таварлă пулас çук тесе, парттипе Совет влаçĕ çинђен елек сарађђĕç. Пиђетре тухса каланă сăмахĕсенђе те вĕсем—Ђăваш çĕр шывĕ таварлă районтан потрепиттĕллĕ район пулса кайаŤ, криçĕс халĕ вăрçăђђенхиђен те вăйлăрах, коллективисатси саланакан хуçалăх никĕсĕ çинђе мар, ŷсекен, таварлăхланакан хуçалăх никĕсĕ çинђе анђах ăнăçлăн ŷссе пыма пултараŤ, 20 кектар çинђе колхос тăваймăн, йалтан тухакан йалхуçалăх протуксин прођђăнĕ вăл çителĕклĕ çитеймен пирки ŷсет тата урăхла та, тата темле калаççĕ вĕсем. Çавăнпа вĕсем йалтан тарма, йала кулаксене ирĕкленсе пурăнма, унта тĕреклĕ уйрăм хуçалăхсем ŷстерме ђĕнеççĕ. Çак теорин çимĕçĕсене епĕр кулленхи ĕçре çĕнтерейменха. Вĕсем колективисатси çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе ŷссе пынинђе палăраççĕ, вĕсем акрокулђттурăллă плана, çураки планне пурнăçа кĕртей-

меннинҫе, ҫирӗп сатанисене тултарманнинҫе тата ыттисенҫе те хӑйсене палӑртаҫҫӗ.

Ҫавӑнпа та пирӗн ҫак фронтра кӗрешӗве хыттӑн вӑйлатмалла.

## Аслӑ патшалӑхла шовинисӑмпа вырӑнти натсионалисӑма хирӗҫ.

Ҫӑваш респуплӗк условийӗсенҫе,—кунта йал куҫттурӑ тӗлӗшӗнҫен кайарах тӑратха, кайа йулнӑ халӑха хӑйне майлӑ ытти уйрӑмлӑхсем те ҫылай,—сотсиалисӑм строиттӗлствипе вӑйланса пыракан коллективисатси йухӑмӗ, талкӑшпех колхоса куҫнӑ май кулаксен класне пӗтересси клас тӑшманӗ питӗ хайаррӑн хирӗҫнипе тӗл пулаҫҫӗ (террӑр, вут тӗртни, вӗлерни, хӑйсем йенне ҫавӑрни, кайа йулнӑ хӗрарӑмсемпе усӑ курма тӑни т.ыт).

Клас тӑшманӗсемпе кӗрешесси, уйрӑмах—кулаксемпе кӗрешесси тата клас ҫулйӗрне тӗрӗс тытса пырасси ҫӑваш ҫӗршывӗнҫе—клас тӑшманӗсем натси уйрӑмлӑхӗсемпе усӑ курма тӑрӑшнипе—йӑвӑрланат, клас кӗрешӗвӗ ҫапла вара натсиллӗ ӗҫсемпе ҫыхӑнса пырат.

Ҫавӑнпа та епӗр натси политтӗкне тӗрӗс тытса пырасси ҫине уйрӑмах хыттӑн пӑхатпӑр.

Пирĕн ђăваш çĕршывĕнђе татса хуман ыйтусем те, халăхсем хушшинђи хирĕçўсем те çук, анђах аслăпатшалăхла шовинисăмпа вырăнти натсионалисăм палăрни пурха.

Аслăпатшалăхпа шовинисăм палăрни— аппарата тĕплетессипе ђăваш ђĕлхине ĕçе кĕртессине хирĕç пынинђе, ђăвашсем çине йĕрĕнсе пăхнинђе, ђăвашсем респуплĕке тытса пыма пултараймаççĕ теме тăнинђе, ђăваш ĕçхалăхĕн нушисемпе ыйтăвĕсем çине кирлĕ пек пăхманнинђе, пролеттари катăрĕсем хатĕрлессине хирĕçниђе, Ђулхула крайне кĕнине—респуплĕке пĕтерсе лартни пулаť тесе шутланинђе, т. ытти те палăраť.

Аслăпатшалăхла шовинисăм палăрнине кăтартакан уйрăм ĕçсем претприйаттисемпе шкулсенђе те пулнă. Çакăн пек пулни вăл—ђăвашсене хĕсĕрлеме тăнинђе, вĕсене хĕненисем пулнинђе, ĕçе илмесĕр тăнинђе, вырăссемпе танлаштарсан ĕçукçи кайарах панинђе тата ыттисенђе те палăрнă (Куславккари, Çĕмĕрлери, Улатăрти, т. ыт. савăтсенђе пулнă). Шкулсенђи алсăпатшалăхла шовинисăм— ђăваш ђĕлхине шутсăра хума тăнинђе мăшкăласа кулнинђе, йĕрĕнсе пăхнинђе т. ыт. палăраť.

Тепӗр йенҗен, вырӑнти натсионалисӑм пурри палӑрат. Ҷӑваш интелекентсишӗн пуршуаллӑ, ессерле, натсионал-темократла пайӗ йалхуçалӑхпа политтӗк ыйтӑвӗсем тӑрӑх хӑйне кура теори тунӑ.

Вӗсем: Октӑпӗр револҗутси ҷӑвашсене нимӗн те памарӗ, ҷӑвашсем ӳт-пӳ йенҗен те, ӑс-пуç йенҗен те пӗтсе пыраççӗ, Ҷӑваш çӗршывӗ колони вырӑнӗнҗе анҗах тӑрат, тесе вӗрентнӗ. Вӗсем классем пуррине курмаççӗ, клас кӗрешӗвне йышӑнмаççӗ, кулҗттурӑ ыйтӑвӗсем тӑрӑх хӗвеланӑç йеннелле туртӑнма җӗнеççӗ, пулса иртнӗ Пулхӑр патшалӑхӗн кунӗсене ырлаççӗ, т. ыт. те.

Çакӑн пек совета хирӗçле шухӑшсене темиçе çул хушши, уйрӑм—1926—27-мӗш çулсене çитиҗҗенех тӗрлӗрен çырнӑ просветенисенҗе вӗрентсе пынӑ.

Илӗпӗр 1925-мӗш çула Партти ӗçӗн җеретри сатаҗсем çинҗен. Ҷӑваш оркаснсатсин Оплӑçри партконферентси çирӗплетнӗ теçӑсра çакӑнпек каланӑ:

„1. Вӑрçӑ, выçлӑх çулсенҗе, тата вӗсен йулашкисемпе аманса йулнӑ Ҷӑваш хапрӑк-савӑт промышленнӑçӗ иртнӗ 7 уйӑх хушшинҗе, малтанхи пекех, вӑйланса пыма кирлӗ тӗп майсем—çавӑрӑнса çӳрекен укçа-тенкӗ çителӗклӗ пулман пир-

ки--лайăхлатас йенђен улшăну памарĕ. Вăрманпа йăвăç ĕçне тăвакан промышленнăçри савăт претприйаттисенђе вуннăшĕ ытла кирлĕ пек укçа-тенкĕ çук пирки ним ĕçлемесĕрех тăраççĕ, унта ĕçлекен çĕршер рапођђисем йаланах ĕçлекен претприйаттисем хупăнас пек хăрушлăх умĕнђе тăраççĕ, вĕсенђен 2—3-шер анђах ĕçлеççĕ. Ђăваш респуплĕкĕнђи сахал йышлă хапрăк-савăт претприйаттисене те пулин ура çине тăратма хамăр патăрта кирлĕ пек ђăн условисем, кирлĕ пек майсем çукки (хуçалăхăн аслă оркăнĕсем йенђен ђăн пулăшу паманни)—çапла вара ăна йăвăр пурнăçра, мĕн пуласси нимĕн те паллă мар пурнăçра хăварат.

2. Тепĕр йенђен, пирĕн ђăваш хресђен еккономĕк уйрăмăн палăрса тăракан йенĕсем ку таранђенех çаплипех йулаççĕ; вăл йенсем çаксем пулаççĕ: кайа йулнă виçĕ пуссăллă йĕркепе ĕçлĕ вăхăтра çĕр хĕсĕклĕхĕ, уйрăм хресђенсемпе ушкăнлă хуçалăхсен таварлăхĕ нађар вăйланса пыни, нумай пусăллă уйа куçас ĕçе васкатма, выђăхђĕрлĕх усрас ĕçе вăйлатма хресђенсен хăйсен те, кивçенлĕх оркăнĕсен те çителĕклĕ таран укçа-тенкĕ çукки, çĕр сахал пирки йалхуçалăхĕнђе ирĕк ĕç вăйĕ ытларах та ытларах ўссе пыни,—

вĕсем йут çĕре кайса ĕç шыраççĕ,—хуçалăхра пуçĕпе пекех тара тытакан вăйпа усă курманни, копператсилеме кирлĕ майсем вăйсăрри пулаççĕ,—çаксем халĕ те çаплипех йулаççĕ.

Кунпа пĕрлех, хресҫенсен ҫухăн пайĕ вуншар пинĕн хăйсене пурăнма çĕнĕрен майсем шыраççĕ, вĕсем ку тĕлĕшпе аласҭиллĕ ҫăпта промышлĕннăçĕнҫе, санитҭари йенҫен тўсме çук наҫар условисенҫе ĕçлеççĕ.

Çакăнпа çыхăнса тăраҭ вара халăх кайа йулни, тĕттĕмлĕх (сăра, самакон ĕçесси массăлăн сарăлни, трахком, туперккуҫос сарăлни)».

Мĕн çинҫен калаçаççĕха çак теçĕссем? Вĕсем çакăн çинҫен калаçаççĕ: пире ҫенттăр пулăшмасҭ, малалла вăйланса пыма нимĕнле кунçул та курăнмасҭ, халăх пĕтсе пыраҭ, т. ыт. те—акă мĕн çинҫен калаççĕ вăл теçĕссем.

Натсиллĕ шовинисăм уйрăмах Йаккăвлĕвпа Ҫĕмпĕр шкулĕн йупилейне иртернĕ ҫухне, тата крайеветсен сйесĕнҫе çивĕҫҫĕн палăрҫĕ.

Пуршуаллă, натсионалисла, совета хирĕçле пур елементсем те çав йупилей тавра пĕр ушкăна пухăнҫĕç. Вăл йупилейа

вĕсем натсиллĕ уйавĕ Йаккăвлева—«натси паттăрĕ» туса йама тăрăшнă.

Партти орканисатсинђи сылтăм елементсем,—кунта пӳрон уйрăм ђленĕсем те пулнă,—натсионалисăмпа хыттăн кĕрешес вырăнне хăйсем çак елементсемпе пĕрлешсе кайнă, вĕсем, кĕрешĕве Мускава куçарса Опком рукковотстви çине тапăнма тăрăшнă.

Оплăçри партти орканисатсин Тĕпкомпа Крайком йертсе пынипе аслăпатшалăхла шовинисăмпа вырăнти натсионалисăмла шухăшсене палăртакансене хирĕç, вĕсемпе килĕштерекенсене хирĕç хайаррăн кĕрешсе пынă, вăл кĕрешĕве халĕ те çаплах туса пырат.

Крайком пӳровĕ партти тĕп çулйĕршĕн кĕрешес ĕçре епĕр тунă çитĕвӳсене паллă туса, пире пĕтĕм партти орканисатси ĕçне малашне тĕп хăрушлăх пулса тăракан сылтăм оппортунисăмăн пур палăрĕвĕсемпе те татăклăн кĕрешсе пырса, сылтăм оппортунисăмпа çыхăну тытса сотсиалисăм тăвас ĕçри пођшевикла хăвăртлăхсене пăсас çулпа пыракан «сулахай» оппортунисăмпа пĕр килĕшмесĕр кĕрешсе пырса, партти орканисатсин пĕтĕм ĕçне парттин тĕп çулйĕрне пођше-

викла пурнăçа кĕртсе пымалла туса йĕркелеме» хушрĕ.

Крайком оплăçри партти орканисатсине пур аслă патшалăхла шовинисăмпа вырăнти натсионалисăмла шухăшсене палăртакансене хирĕç хыттăн кĕрешсен пыма хушнипе пĕрлех, кулаксем сотсиалисăма хирĕç кĕрешес ĕçре натсипе йăх йулашкисемпе усă курма тивнине хирĕç кĕрешесси çине уйрăмах пăхма хушрĕ.

Кулаксем çине аслăн наступлени туса пырас ĕçре пирĕн парторканисатсин, респуплĕкри ĕçхалăх масси натси, тата култтурă тĕлĕшĕнђен кайа йулнипе кулаксем усă курма тăнине хирĕç кĕрешесси çине уйрăмах хыттăн пăхмалла.

Крайком кăтартăвĕсене Ђăваш парторканисатси пурнăçа кĕртессине епĕ шансах тăратăп.

## Респуплĕкри хуçалăх строиттĕлствин ыйтăвĕсем

Ђăваш çĕршывĕн хуçалăх, опђăпа културтур строиттĕлстви ĕçĕ тĕлĕшĕнђен пирĕн партти орканисатси умĕнђе тăракан тĕп сатађсем çаксем: натсиллĕ пĕртанмарлăхăн йулашкисене пĕтересси, йалхуçалăхне сотсиалисăмла çĕнетесси, промышлĕннăçа вăйлатса натсиллĕ пролетта-

ри тăвасси натсилле-советла патшалăх йĕркине пурнăçа кĕтсе пырасси, ĕçхалăхне çывăх тата ăна ăнланмалла, формă йенђен натсиллĕ—шухăшĕпе пролеттариллĕ куљттура сарасси, сотсиалисăм строиттĕлствин пур пайĕсем тăрăх та натси катăрне тăвасси—пулса тăраççĕ.

Октăпĕр револђутси пулни 14 çул, Ђăвашсен автономи 11 çул хушшинђе çак сатађсене пурнăçа кĕртес ĕçре епĕр пит те пысăк çитĕнÿсем турăмăр.

Халăх хуçалăхĕн пĕтĕм протуксийĕ 1926-27-мĕш çулта 61.157 пин тенкĕлĕх пулнă, 1931-мĕш çулта 179,5 мĕлйун тенкĕлĕх кăларма паллă тунă.

Халăх хуçалăхĕнђе **пĕрлештеркĕ пай ÿсет**, вăл 1929-мĕш çулта—25,1прођђăн пулнă, 1930-мĕш çулта 39 прођђăн, 1931-мĕш çулта 52,5 прођђăн пулмалла.

Халăх хуçалăхне укçа-тенкĕ хывасси çулран çул ÿсет: 1926—27-мĕш çулта вĕсем—3.964 пин тенкĕлĕх пулнă. 1931-мĕш çулта 30,8 мĕлйун тенкĕлĕх хума паллă тунă: 1930-мĕш çулпа танлаштарсан ÿсĕм 69,2 прођђăн пулаť.

Халăх хуçалăхĕ ÿснипе пĕрле пÿтшет та ÿсет. 1922—23-мĕш çулсенђе кашни çын пуçне 37 пус расхут кăларнă пулсан, 1926-27-мĕш çулсенђе—6 тенкĕ те 75 пус,

1931-мĕш çулта план тăрăх 26 тенкĕ те 72 пус расхут кăлармалла.

Ку таранђђенех ђăваш еккономĕкĕнђе çĕр ĕçĕпе вăрман хуçалхĕ тĕп вырăнта пулса тăраççĕ. Аласти промышленнăçĕ вăйлă сарăлнă. Шултра помышленнăç Октăпĕр револђутси хыççăн тин ђăвашсен автономи илнĕ хыççăн тин вăйланма пуçларĕ, йулашки çулсенђе, ку ўсĕм хăвăртрах та хăвăртрах пулса пыма пуçларĕ. Ку ĕçре малашне тумаллисем тата та пысăк.

Крайком пирĕн орканисатси токлађĕ тăрăх респуплĕк еккономнĕкне сотсисиалисăмла урăхлатса çĕнетес ĕçре епĕр ђылай пысăк çитĕнўсем тунине палăртса хăварђĕ

## Йалхуçалăх.

Пайанхи куна (1931-мĕш çулти авкустăн 20-мĕшне) пирĕн респулĕкри ђухăнпа вăтам хуçалăхсене 39,1 прођђăн коллективисатсиленĕ,— çавна тунипе шултăра йалхуçалăх происвотствин çирĕп никĕсне хывнă. Колхосри хуçалăхсен хисепĕ ўссе пыраť—ийунĕн 15-мĕш тĕлне кашни колхоса вăтамран 34 хуçалăх тивнĕ. Мĕн пур колхоссен хисепĕнђе ертелсем 95,7 прођђăн йышăнса тăраççĕ.

Кăçал Ђăваш çĕршывĕнђе 4 МТС орканисатсиленĕ. Çитес çулта тата 8 МТС

органисатсилемелле. Машшинпа трактăр стантсисем Ђăваш çĕршывĕ уйхирĕсенђе техниккăлла револђутси туса пыраççĕ, тата сылтăм оппортуниссем парттипе влаç çине: ђенттăр пире пысăк машшинсем памаççĕ тесе елеклесе каланисене татах та тепĕр хут çапса çĕмĕреççĕ. Крайком çакна палăртрĕ: ЂАССР-ĕн йалхуçалăхĕ машшинпа хĕçпăшалланни (1929—30-мĕш çулхинђен 143 прођђăн таран) ӳснĕ, пуринђен ытла пысăк йалхуçалăх машшинĕсем ӳсни суха пуçне кăçалхи çул тĕпрен илсен хĕссе кăларнă. Выђăх-ђĕрлĕх валђђи кирлĕ апат-çимĕçе çителĕклĕ таран туса пама тĕреклĕ никĕс хывас ĕçре пирвайхи хут çитĕнӳсем тунă (выђăх апађĕсем акнă çĕр лаптăкĕсен хисепĕ: пăрçа çимĕçсене акни—2,5 прођђăн, пĕр çула тата нумай çула пыракан курăксем акнă çĕрĕн—1,5 пуçласа 6,57 прођђăна çитиђђен ӳснĕ).

Çавăнпа пĕрлех, йулташсем, йалхуçалăхне реконструксилес ĕçри пысăк çитĕнӳсемпе пĕрлех, пирĕн ĕçре прорывсем пур.

Çуракине иртерессине тĕпрен илсен епĕр çителĕклĕ туса пынă пулин те, çураки планне пĕтĕмĕшпех тултараймарăмăр (3,74 прођђăн'. Пуринђен ытларах паранкăна уйа акассин планне (плана 56 прођ-

ҫӑн ҫеҫ тултарнӑ), маххорккӑ акассин (план 67,5 проҫ.), ҫуртри тулӑ (70 проҫ.), урпа (75 проҫҫӑн), т. ыт. акассин планӗсене тултарасси кайа йулҫӗ.

Йалхуҫалӑхне коллективисатсилес ӗҫре хӑшпӗр районсенҫе кӑмппанилле ӗҫленисем палӑраҫҫӗ, уйрӑм районсенҫе ӗҫ хӑй тӗллӗн пулассине шаннисем пулкаланӑ.

Пуринҫен ытларах епӗр колхоссене орканисатсипе хуҫалӑх йенҫен тӗреклетес тӗлӗшпе кайа йулса пыратпӑр: ӗҫ выҫӑкне, тата сутлӑх ҫимӗҫ паракан выҫӑха пӗрлештерес ӗҫре, выҫӑх картисемпе сысна витисем тӑвас ӗҫре, пайланман фонтсем тӑвас ӗҫре, т. ыт. те.

Колхоссенҫе ҫтелшҫӑнапа усӑ курассишӗн, ӗҫе тӗрӗс орканисатсилессишӗн, ответсӑрлӑха пӗтерессишӗн кӗрешесси ӑраснах наҫар пыраӑ.

МТ стантсисен лайӑх ӗҫӗсемпе пӗрлех, вӗсем хӑйсен ӗҫӗсене пӗтӗмӗшпе илсен наҫар туса пынине палӑртмалла. Машшинсем ҫас-ҫасах ӗҫсӗр тӑнисем, машшин пайӗсем, машшинсем ҫӗмӗрле-ҫӗмӗрӗле кайнисем, сӗрмеллипе ҫунтармалли йапаласене ытлашши расхутланисем пур. Трактӑрсене пӗрерӗн-пӗрерӗн йарса сапалантарнисем пур, МТС-не талкӑшпех

коллективисатсилес ӗҫӗн тӗрекӗ вырӑнне хурса усӑ курса пырас вырӑнне, вӗсем ҫине ђас-ђасах проккатнӑй пунктсем ҫине пӑхнӑ пек пӑхкалаҫҫӗ. МТС ӗҫлекен районсенђе коллективисатсин прођђӑнсем пӗтӗм респуплӗкринђен кайра пыраҫҫӗ. Токӑвӑр кампанипе халӑх сретствине мопилисатсилес плана пӗтӗмӗшпех тултарман. Трактӑрђентр оркӑнсем йенђен йертсе пырасси пит нађар пулса пынӑ.

Совхоссен акнӑ ҫӗр лаптӑкӗ кӑҫалхи ҫул 24 прођђӑн ӳснӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех совхоссен пурнҫӗ пит йӑвӑр пыраӗха. Вӗсем халхи вӑхӑтра кӑтартуллӑ сотсиалисӑмла хуҫалӑхсем пулайманха. Выљӑхђӗрлӗх ӗрђетес ӗҫе сарса йарассин планӗ нађар пулса пыраӗ.

Выљӑх-ђӗрлӗх усрас ӗҫӗн сотсиалисӑмла пайӗнђе йулашки вӑхӑтсенђе выљӑх пуҫӗсен хисепӗ ђылай ӳснипе пӗрлех (майӑн 15-мӗш тӗлне пӗтӗм лашасен хисепӗнђен 16 прођђӑнне колхоссем пӗрлештернӗ, 1929-мӗш ҫулта вӑл хисеп 1 прођђӑн пулнӑ, мӑйраккаллӑ шултра выљӑха майӑн 15-мӗшне—2,8 прођђӑн, сыснасене—3,3 прођђӑн пӗрлештернӗ), выљӑх-ђӗрлӗх усрас ӗҫӗн сотсиалисӑмла пайӗн йӑвӑрӑшӗ, пуринђен ытла протук-

тă паракан выљăхсен тĕлĕшĕпе, питĕ пĕђĕккĕха. Пĕрлештернĕ выљăх кĕтӳвĕсене, ăратлăх выљăхсем тăратмалли вырăнсене йĕркелесе тăвас ĕçсем ăраснах çителĕксĕр пыраççĕ. Сĕт тавар фермисемпе сысна тавар фермисем орканисатсилессин хăвăртлăхĕсем çителĕксĕр. Сотсиалисăмла выљăх-ђĕрлĕх усрас ĕçе сарса йарас ыйту, ПСК(п)П, ССРС Халăх комисарĕсен канашĕ, тата ПСК(п)П Крайкомĕ йулашки ђĕнӳнђи хушу ыйтнă пек, Ђăваш респуплĕкĕнђи йалхуçалăхĕн тĕп ыйтăвĕ выраннех йышăнса тăрайман.

Выљăх апађĕ тăвас ĕçре хускану тунипе, ђылай çитĕнӳсем пуррипе пĕрлех хăшпĕр орканисатсисем выљăх апатне хăвăрт çителĕклĕ тăвас ĕçе çителĕклĕ хак парса ĕçлемеççĕ. Пăнтăхса ларса ĕçлесси нумай пулăрай-хэ. Пĕрĕмĕш ђеретри çилос кампании усă параймарĕ. Çилос пахалăхĕ çинђен, çилоса мĕнле хывасси, т. ыт. çинђен ăнлантарассине сарса йарайман.

Ђăваш респуплĕкĕн хуçалăхĕнђе ђылай выран йышăнса тăракан кайăк-кĕшĕк хуçалăхĕ ĕçĕ çине çителĕклĕ пăхса пыраймаççĕ.

Йалхуçалăхне сотсиалисăмла улăштарса çĕнетес ĕçри пысăк прорывсене па-

лӑртса, Крайком пӳровӗ оплӑҫри парторканисатсийе малалла ҫав кӑтартнӑ ҫитменлӗхсене пӗтерсе хурасси ҫине пит вирлӗн пӑхса пыма хушрӗ.

Крайком пирӗн совхос строитӗлствине пӗтӗм вӑйпа малалла йама кирлине кӑтартса паҕӗ. Ку ӗҫре крайком авкустӑн 4-мӗшӗнҕе йышӑннӑ решшенисем пирӗн-шӗн малаллахи практӗккӑлла ӗҫсен прокрамми пулмалла.

Колхос строиттӗлствинҕе тӗп вырӑн йышӑнса тӑракан халиҕен уҫӑлнӑ йалхуҫалӑх ертелӗсене орканисатсипе хуҫалӑх йенҕен тӗреклетес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене сарса йамалла.

Крайком ӗҫ выҕӑхне ҕӑн-ҕӑнах пӗрлештерессишӗн, тата пӗрлештернӗ кӑпитала малашне те ӳстерессишӗн, колхос ӗҫӗнҕи пысӑк ӳсӗмсемпе унӑн пахалӑхне хӑпартассишӗн кӗрешессине кулленех вирлӗн йертсе пырса, ӑна пысӑк йалхуҫалӑх происвотствинҕ епур ӗҫре те ҫтелшҕӑнӑна ҕӑн-ҕӑнах пурнӑҫа кӗртсе ҫитерессипе (ушкӑнлипе ҫеҫ мар, пӗҕҕенлипе те) технӗккӑна ҫавӑрса илесси ҫинҕе туса пымалла, ҫапла майпа вӗсенҕе ӗҫ тухӑҫлӑхне паллӑнах хӑпартса йама, тата промышленнӑҫра усӑ курма ҫӗнӗрен

рапоҫҫисен реҫервине пушатса пыма кирлине кӑтартса паҫё.

Малашне коллективисатсишён кёрешес ёҫре пирён партти Тёпкомё авкустӑн 2-мёшёнҫе йышшӑннӑ решшенире потрепиттёллё районсем тӑрӑх кӑтартса панӑ тӑрӑх ёҫлесе, „коллективлас ёҫе тёпрен илсен 1932—33-мёш ҫулта вырӑна кёртсе ҫитерессипе ҫыхӑнтарса туса пымалла. Кун пек районсемпе оплӑҫсен парторканисатсисене партти Тёпкомё уйрӑмӑнах коллективлассин вёрсе хӑпартнӑ рапоҫҫисем хыҫҫӑн хӑвалассинҫен асӑрханма хушаӗ. Партти Тёпкомё ҫак орканисатсисен хӑйсен харпӑр рапотнёксене уйрӑмӑнах колхоссенҫи орканисатсилёхпе строиттёлствӑ ёҫёсене аванлатас сатаҫ ҫине, тата пуринҫен малтан йётёнпе пахҫа-ҫимёҫе тӑвакан колхоссене ҫирёплетессиҫине асӑрхаттарса пӑхтарма хушаӗ“.

Колхосӑн шалти ёҫёсене тарӑнлатса сарса йарса, колхоссен пёрне-пёри утарнёк-колхоҫнёксен прикатисемпе колхоссен шалти ёҫёсем мёнле пынине тёрёслесе кӑна мар, сӑнаса вёренсех пымалла. Тоххотсене ҫӑн-ҫӑнах ёҫ хисепёпе пахалӑхё йенҫен, йатак тӑрӑх мар, валеҫмелле тумалли майсене пётёмпех тупса

памалла,—вăхăтрах авансcене ĕçленĕ ĕç кунĕсемпе çыхăнтарса, пĕр пек валеçеслĕхрен хыттăнах пăрăнса, пырса пымалла.

Парторканисатсисен кашни колхос политтĕкпа хуçалăх йенҍен мĕнле тăнине пĕлсе тăмалла. Ҍи пысăк колхоссем çумне район ҍентăрĕсенҍен ответлă вырăнта ĕçлекенсене çирĕплетсе, вĕсене колхосшăн, колхос хăйĕн ĕçĕсене вăхăтра туса пынишĕн ответ тытса пыма хушмалла. Колхос активĕпе, тата ҍухăнсемпе ĕçлессине орканисатсилесе, тырпула пуçтарса кĕртессине, акассине, кĕрхи çĕртме тăвассине, çилосласcине, пахҍаçимĕçсене пуçтарса кĕртессине, тырă пухассине, т. ыт. вăхăтра туса пымалла. Колхосри партйаҍейккăсене, вĕсен йертсе пыраслăхне çирĕплетсе, вăйлатмалла. Пур ĕçе те сотсиалисăм ăмăртăвĕпе утарниҍҍĕства çине тăрса тумалла.

Выљҍăх-ҍĕрлĕх усрас ĕçе сотсиалисăмла сарса йарас тĕлĕшпе, Крайком крайри уйрăм орканисатсисемпе респуплĕкри орканисатсисем выљҍăх-ҍĕрлĕх ĕрҍетес ыйтува татăклă татса пурнăçа кĕртесси çине кирлĕ таран пăхманнине палăртрĕ; потрепиттĕлĕ хуçалăхран тавар тăвăмлă тă-

вас шутпа Ђăваш респуплĕк йалхуçалă х не урăхлатас çĕнетес çĕрте тĕп вырăнта тăракан сотсиалисăмла выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕçе хăвăртрах малалла йарас сатађа кирлĕ пек хак паманнине палăртрĕ. Пирĕн кĕске вăхăтра выђăх-ђĕрлĕх фермисен, сĕт таварлă фермăсене сысна таварлă фермăсен строиттĕлствине, тата выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетессине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе çитермелле, вăл ĕçре пирĕн татăклă хускану тумалла. Крайком пўровĕ крайри çĕр управленине пирĕн респуплĕкре ăратлă выђăхсен, тата сыснасен кĕтўне тума хушрĕ. Çавăнпа пĕрлех хађхи вăхăтри ăратлă выђăхсемпе кирлĕ таран усă курассине орканисатсилеме хушрĕ.

1933-мĕш çул вађђи выђăх апађĕ мĕн таран кирлине витсе çитермеллĕх выђăх апађĕ тăвас тĕлĕшпе, вăл апата лайăх усрама, тата вăхăтра пуçтарса кĕртмелли кирлĕ ĕçсене туса хумалла.

Акмалли çĕр лаптăкне малашне тепĕр майах сарса пырса (хурı пусăллă уйсене пĕтерессии, хăртасси, шурсене типĕтесси) йалхуçалăхне çпетсиалисатсилес тĕлĕшпе тăракан сатађсем хушнине асра тытса, Улатăрпа Пăрађкав, тата ытти районсенђе те йĕтĕн акассине

татах сармалла, кантăр акассине те, пуринђен ытларах Елёкре ç̆ёнёрен тăвакан савăт таврашёнђе вирлён сарса йамалла. Мён пур тёпри уђрештенисемпе орканисатсисен çав районсене камăн мён ђухлё вăй çитнё таран, татăклăнах йертсе пырассине тумалла.

Иалхуçалăхне сотсиалисăмла улăштарса çёнетес тёлёшпе Крайком йышшăннă решшени пирён партти орканисатси çине пысăк сатађсем хурат. Парторканисатсин вăл решшенисене кёске вăхăтрах пурнăçа кёртсе çитермелле.

## Промышлённăç.

Çак иртнё çулсем хушшинђе промышлённăç ёçёнђе те епёр пысăк çитёнӳсем турăмăр. Çёнё савăтсем турăмăр. 2,7 мёлйун тенкё тăракан „Пољшевик“ савăта туса пётерсе, ăна хута йатăмăр; 1.083 пин тенкё тăракан Вăрнарти фосфорит савăтне хута йатăмăр; 7,5 мёлйун тенкё тăракан стантартлă çуртсен Куславккари савăтне туса çитеретпёр; 2 кирпёђ савăђё, çкипитар савăђё тунă.

1929—30-мёш çулта промышлённăçăн тёп кăпиталне 7.167 пин тенкё хунă. 1931-мёш çулта 9.959 пин тенкё хумалла пулат. 1928-мёш çулђен кăпиталлă ху-

русем пит пĕђĕккĕ пулнă, вĕсене пĕтĕмĕшпех тенĕ пек промышлĕннăçа хăпартнă çĕре йанă. 1923-мĕш çултан пуçласа 1928-ш çула çитиђђен çĕнĕ строиттĕлствăна мĕн пурĕ те 47.000 тенкĕ хунă пулнă. Анђах 1928—29-ш çулта кăпиталлă хуру харăсах пысăккă çĕкленет, 3.283 пин тенке çитет.

Промышлĕннăçăн пĕтĕм протуксийĕ çулсем тăрăх çапла шутланнă:

1929—24 ç. ç.—759,2 пин т-лĕх,
1925—29 ç. ç.—5.445 пин „
1926—30 ç. ç.—15.449,9 пин „
1931—27000 пин тенкĕлĕх тума шутласа хунă.

Промышлĕннăç ўснĕ май пролеттаритле катăрсем те ўссе пыраççĕ:

1922—24 ç. 587 çын рап-ђи пулнă.
1925—26 ç. 889 „ „ „
1929—30 ç. 3.586 „ „ „
Хаљхи вăхăтра 7645 çын рапођђи шутланать.

Натсионаллă катăрсем ўссе пыраççĕ, анђах вĕсен ўсĕмĕ ытла та йерипен пырать, çак вăхăтра вĕсен шуђĕ прођђăн тĕлĕшĕнђен ўссе мар, ђакса пырать. Анђах кăçалхи çулта ĕç татăклăн улшăннине куратпăр. 1929—30-мĕш çулта ра-

поҫҫи Ҫăвашсем 35,3% пулнă пулсан, 1931-мěш ҫулта вěсем 40% ҫитеҫҫě. Хěрарăмсем рапоҫҫисем хушшинҫе 20% шутланаҫҫě.

Халăх хуҫалăхě тăвăллăн хăпарса пынă май рапоҫҫисен пурнăҫě куҫттур йенҫен те ӳссех пырать. Рапоҫҫисем валҫи ҫěнěрен ҫуртсем тăваҫҫě. Ҫăвашсем пăрусемпе, путексемпе пěрле пурăннă хăйсем пěҫěк пӳрҫěсенҫен лайăх ҫуртсене куҫаҫҫě. Анҫах та рапоҫҫисем валҫи пурăнма ҫуртсем ҫитмеҫҫěха.

Ěҫ условисене лайăхлатас тěлěшпе тăвакан ěҫсене вăйлатса пыратпăр. Соцсиални страххований фонҫě ӳссе пырать. Рапоҫҫисем валҫи 25 хупă столовăй, 5 хупă рапоҫҫи копператтив, 23 хупă распретелиттěл уҫнă.

Татăклă виҫҫěмěш ҫулта Ҫăваш респуплěк промышлěннăҫě 27.960 пин тенкěлěх протукси туса кăлармалла, иртнě ҫулхипе танлаштарсан, 122 проҫҫăн пулать.

Ҫакăнпа пěрлех, 1931 ҫулта Ҫăваш респуплěк промышлěннăҫěнҫе пысăк прорывсем пур. 1931 ҫулăн малтанхи ҫурҫулěнҫе промфинплана йышăннă тăрăх епěр 73,9 проҫҫăн ҫеҫ тултарнă.

Уйрăм претприйаттисем тăрăх:

| | | |
|---|---|---|
| „Пољшевик“ савăт тăрăх | 82,9% | |
| Фосфорит савăђĕ | „ | 50,5 „ |
| Кирпĕђ савăђĕсем | „ | 37—40 „ |
| Хăма çуракан сав. | „ | 76—98,7 „ |

Сăран савăђĕпе маххоркка савăђĕ çех хăйсен промфинпланĕсене ытлашшипех тултарнă—малтанхи 114 прођђăн, иккĕмĕшĕ 104,7 прођђăн.

Пахалăх тĕлĕшĕнђен те ĕç çавăн пекех йапăх пыраť. 10 хăма çуракан савăт тăрăх 4 уйăх хушшинђе таварăн хăйне тăракан хакĕ 4,4 прођђăн, ерех савăђĕсем тәрăх 3,5 прођђăн ӳснĕ. Пĕр „Пољшевик“ савăт çеç тавар хакне 18,6 прођђăн ӳкерттерет.

Çĕнĕ строиттĕлствăна калама çук пысăк укçа-тенкĕ хыватпăр. Анђах епĕр стройккă тума вĕренсе çитменха. Строиттĕлствă пирĕн ытла та йапăх пыраť. Çĕмĕрле кăмпинатне епĕр 2 çул тăватпăр ĕнтĕ, анђах пĕр уйрăмĕ те унăн пĕтĕмĕшпех ĕçлемест-ха. Ытти стройккăсем те çапла вăрахăн пыраççĕ.

Пайан çеç Халăх кăмиссарĕсен канашĕ Куславкка кăмпинат тиректăрĕн токлатне итлерĕ. Вĕсен промфинплана тултарма пур условисем те пур, анђах Тĕпком

корнексене çуртсем тăратма хушнине пурнăçламаççĕ. Кунта, паллах, Партти Тĕпкомĕн кăтăртăвне тивĕçлĕн хак паманни курăнать. Куславккасен халех ку тĕлĕшрен вăйлă ĕçлеме тытăнмалла.

Мĕншĕнха пирĕн промфинплана тултарасси, тата çĕнĕ строиттĕлствăн ĕçĕ йапăх пырать? Мĕншĕн тесен, епĕр çĕнĕ условисенђе çĕнĕлле ĕçлесе пыраймастпăрха, ĕçе тĕплĕн йертсе пыраймастпăр, массăна орканисатсилеме пĕлместпĕр, тата хуçалăх рашђутне те пурнăça кĕртме пĕлместпĕр.

Сталин й-ш кăтартса панисене промфинпланшăн кĕрешнĕ çĕрте епĕр çивђĕ хатĕр тăвайманха.

Рапођђи массăсен хастарлăхĕн пуçне тăмаççĕ. Пирĕн сотсиалисăмла ăмăртупа ĕçлекен рапођђисем 46%, утарлă ĕçлекенсем 40%, пилĕк çуллăх пĕтиђђен происвотствăра çирĕпленнĕ рапођђисем 50%. Рапођђисен хастарлăхĕ пурри куç умĕнђех, анђах ку хастарлăха орканисатсилемеççĕ, çавăнпа вăл хăшпĕр ђухне текларатси вырăнне çеç тăрса йулать.

Претприйаттисемпе строиттĕлствăра ĕç укçи тăрăх ответсăрлăх, пурне те танлаштарни палăрать. Ĕç вăйне происвотствăпа строиттĕлствăра çирĕплетмеççĕ.

Çакăн пек ĕçе орканисатсилеме пĕлмен пирки .рапоҕҕисем пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе куçса çÿреççĕ. Çуртйĕр-пурнăç условисем рапоҕҕисен йапăх. Пурăнмалли çуртсем çитмеççĕ, пурăнмалли çуртсемпе усă курма пĕлмеççĕ.

Çутăлăх ĕçе, рапоҕҕисене тавар тăратасси, татсах каламалла, ытла та çителĕксĕр. Пур протуктăсемпех рапоҕҕисен апатне лайăхлатма май пур, анҕах ку ĕçре пирĕн ĕç хăй тĕллĕн йухасса шанса ĕçлеççĕ, рапоҕҕисене тавар тăратассине орканисатсилемеççĕ.

Кăçалхи çул рапоҕҕисен снапшенине лайăхлатас шутпа копператсияхуçалăхĕсем орканисатсилеме пултартăмăр. Мĕн пурĕ 6 копхос 9652 кектар çинҕе тумаллаҕĕ, анҕах ку ĕç ытла та йапăх пырать. Ҕăвашсойуспа Çĕрĕç кăмиссариаҕĕ иккĕшĕ те ку ĕçе тивĕçлĕн хак паман, çакăн пирки те пахҕасем тăвассин планĕ тулман.

## Алăсти промышлĕннăçĕ.

Алăсти промышлĕннăçĕ Ҕăваш респуплĕк хуçалăхĕнҕе пысăк вырăн йышăнса тăрать. 1929—30 çулта пĕтĕм хуçалăх протуксинҕе унăн пайĕ 10,4% пулнă пулсан, халĕ 1931 çулта вăл 11% йы

шăнаť, мĕн пур протуксин пысăкĕшĕ унăн 26.746 пин тенкĕлĕх шутланаť.

Мĕн пурĕ респуплĕкĕпе 46.000 алăсти шутланаççĕ; вĕсенђен 50,36% копператсире тăраççĕ.

Анђах алăсти промышлĕннăçĕпе алăсти промышлĕннăçлă копператси çине çителĕклĕ пăхмаççĕха. Хăшпĕр районсенђе ку ĕç хăй тĕллĕн пыракан йухăма кĕрсе ўкнĕ. Копператсилес хăвăртлăхсем çителĕклĕ мар. Кĕçĕн копператтивсене кашнине уйрăм ăсталăхпа ĕçлемеллине халĕ те туса çитермен. Происвотствăна орканисатсилесси йапăх, тата ыттисем те.

Промышлĕннăç строиттĕлстви тĕлĕшпе пană кăтартусене ĕçе çителĕклĕ кĕртсе çитменнине паллă туса, хăшпĕр районсенђе партти райкомсем (Вăрнарпа Куславкка) вăл кăтартусене тивĕçлĕ хак памасăр, промышлĕннăç претприйаттисене вăхăтра хута йарассишĕн тивĕçлĕ кĕрешў пуçласа йаманнине палăртса, тата 1931 çулта тунă кăпитталлă ĕçсенђен пирĕн промышлĕннăç усă курма йыш йенђен те, пахалăх йенђен те тăрăшманнине паллă туса, тата 1932 çулта кăпитталлă хуру пысăккăн ўсмеллине

палăртса, Партти Крайкомĕ Ђăваш орканисатсине кăпиталлă строиттĕлствăна хунă укçа-тенкĕпе хăй вăхăтĕнђе тата пĕтĕмĕшпех усă курма кирлине тĕп ĕç вырăнне хума хушрĕ. Çакăнпа пĕрлех, Партти Крайкомĕ 1931 çулхи Куславккапа Çĕмĕрле кăмпинађĕсене туса пĕтерсе, вĕсене хута йама хушаť. Ку тĕлĕшпе Крайком тата Опком панă кăтартусене пурне те пурнăçа кĕртмелле.

Крайком пирĕн орканисатси умне промышлĕннăçа йертсе пырассине татăклăн улăштарса, лайăхлатма хушаť. Ку ĕçе пирĕн 1931 çулта апрелĕн 4-мĕшĕнђе Крайком йышăннă постановленисем тăрăх, тата Сталин й-шăн йулашки кăтартăвĕсем тăрăх туса пымалла. Пирĕн промфинплана йыш, тата пахалăх кăтартăвĕсем йенђен тултарассишĕн кĕрешмелле. Пуринђен ытла, происвотствăна ратсионалисатси тăвассишĕн кĕрешмелле; сотсиалисăмла ăмăрту, утарниђĕствă ĕçĕсене сарассишĕн кĕрешмелле; пĕр пĕр пуçлăхлă йĕркепе пĕтĕмпех туса çитермелле; парттипе профсойус ĕçĕсене рапођђисен ўссе пыракан хастарлăхне ытларах çавăрса илес майсем йенĕпе, промфинплана тултарас ыйтусем йенĕпе татăклă улăштарса çĕнетмелле.

Крайком Опкома Куславкка кăмпинађĕ хăй прокрамне мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине йатарласа сăнаса пыма хушрĕ. (Куславкка кăмпинађĕн 200.000 купла меттăр пурăнмалли çурт туса кăлармалла). Кунсăр пуçне, експăрт вађђи тавар тумаллин прокрамне тултарса пынине тĕрĕслесе пымалла.

Куславккапа Çĕмĕрле кăмпинађĕсем хуçалăх, партти, профсойус орканисатсисене Крайкомпа Опком постановленисене пурнăçа кĕртме пулăшассипе Крайком пŭровĕ Крайри халăх хуçалăхĕн канашне, Крайсовпрофа, Крайкомăн оркструктăрсен пэйне 5 кун хушшинђе çак савăтсене уйăх çурра икĕ ушкăнпа 10 çын йама хушас.

Крайри ăслăлăх уђрештенине (Ăслăлăхпа тĕпђев інçтитуђĕ, Крайплан, Комвус тата ыттине те) респуплĕке планлассипе, уйрăм хуçалахлă сатађсем тăрăх крайком пирĕн респуплĕке ăслăллăх тĕлĕшпе пулăшу пама хушрĕ. Крайри Ĕç планĕ, Халăх хуçалăхĕн канашне, Крайпрофсовета ђăваш орканисатсисемпе пĕрле крайри претприйаттисенђе ђăваш промышлĕннăçĕ вађђи квалификкатсиллĕ катăр хатĕрлес ыйтăва пăхса тухма хушрĕ. Çакăнпа пĕрлех,

пирён аппарата (РХТК, Патшалàх планкомиççийĕ, Профсовет) тĕреклетме спети сиалиссем тупса пама пулђĕ. Крайком Крайплана пирён орканисатсисене пулăшма хушрĕ. Пирĕн çак çултах фосфорит, слантса вырăнĕсене тĕпђесе тухмалла. Малашне респуплĕкри пуйанлăхсене тĕпђђессине вăйлатмалла.

Партти Крайкомĕ пирĕн хуçалăх строиттĕлствине лайăхлатассипе çапла пысăк пулăшу панине халĕ пурте кураççĕ ĕнтĕ.

Малалла пирĕн респуплĕк хуçалăхĕнђе алăсти промышлĕннăçĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине паллă туса, Крайком алăсти копператсисене партти йенђен йертсе пырассине вăйлатма хушрĕ, копператсин ĕçне, çĕнетсе, ăна промфинплана тултарас кĕрешӳ йенпе вăйлатма хушрĕ. Алăсти копператсин ытларах тифитситсăр ђĕрĕ тавартан тăвакан протукси планне тултарассипе ĕçлемелле, тавар пахалăхне хăпартмалла, пăсăка пĕтĕмпех пĕтермелле, шалти саппассене мопилисатсилемелле, хуçалăх рашђуђĕ çине куçса, сотсиалисăмла ăмăрту ĕçне сарса, ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешмелле.

Пирĕн респуплĕкри партти, совет, профсойус, копператси, тата ытти ор-

канисатсисен хаљхи вăхăтри вăрçаллă ĕççем çаксем: промфинплана тултарас ĕçри прорывсене пĕтерессси; иккĕмĕш çурçуллăхра промфинплана пĕтĕмĕшпех тултарасси пулса тăраççĕ. Çапла Партти Крайкомĕ промышлĕннăç йенĕпе пирĕн çине калама çук пысăк сатаҕсем хурат.

Ҕăваш парторканисатсийĕн Крайком кăтартăвĕсене ҕи кĕске вăхăтра пурнăçа кĕртсе çитерессишĕн хастарлăн кĕрешмелле.

## Опҕăпа куљттур строиттĕлстви.

Крайком хăйĕн решшенийĕнҕе—парттин Оплăçри орканисатсийĕ респуплĕкри ĕçхалăх массин куљттурне хăпартас, формă йенҕен натсиллĕ—ăшҕикĕ йенҕен пролеттариллĕ куљттур тăвассинҕе уйрăмах паллă турĕ. Халăха вĕрентес ĕçе укçа-тенкĕ хывасси 2 хут ӳсрĕ, шкул çулне çитнисене пурне те хута вĕрентме тытăннă, вĕренекенсен хушшинҕе хĕраҕасен шуҕĕ ӳсрĕ, 1925-мĕш çулта хĕраҕасем 21 проҕҕăн пулнă пулсан, кăçалхи çулра 45 проҕҕăна çитрĕ, 12 çултан пуçласа 50 çула çитнĕ çынсем хушшинҕе хут пĕлменнисем 56000 çын çеç йулаççĕ, (1929-мĕш çулта 266.450 çын пулнă), кĕнеке, хаçат-шурнал кăла-

рассине пит те пысӑккӑн сарса йанӑ, ҫӗнӗрен 10 хаҫат кӑларма тытӑннӑ, ҫӗнӗрен натсиллӗ илемлӗ литтераттурӑ, театтӑр, хореокрафи, кино искустви тунӑ. Халӑх сывлӑхне упрас ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем пур, (траххомпа кӗрешесси) т. ыт. те. Ҫӗнӗрен аслӑ шкусем уҫӑлаҫҫӗ. Ҫӗнӗрен ҫулйӗр тӑвас ӗҫре те пысӑк ҫитӗнӳсем пур.

Ҫакӑнпа пӗрлех ђӑвашсен опђӑпа куљттур строитттӗлствинђе ђылай пысӑк ҫитменлӗхсем пур: рапођђисенђен, колхоҫнӗксенђен натсиллӗ интелекентси ҫӗнӗ катӑрсене хатӗрлес ӗҫре паллӑ ҫитӗнӳсем пур, анђах ку ӗҫӗн хӑвӑртлӑхсем пурнӑҫ ыйтнинђен кайа йулса пыраҫҫӗ, аппарата коренисатсилесси ђӑваш ђӗлхине пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе тӑвакан ӗҫсем ҫителӗксӗр, пурне те хута вӗрентессипе хут пӗлменлӗхе пӗтерессинђе тытӑннӑ ӗҫе прахнисем ђылай палӑраҫҫӗ, уђитлӗсем тата вӗренмелли кӗнекесем ҫителӗксӗр, шкулсемпе пӗрле пурӑнмалли ҫуртсем тӑвассине питӗ нађар сарнӑ, технӗк проппакантине нађар лартнӑ, т. ыт. те. Шкул ҫулне ҫитменнисене воҫпиттани парасси, политтӗкпа ҫут ӗҫсем Ђӑваш респуплӗкӗнђе кайа йулакан уђаскӑтсем. Кашни вулав ҫурт

пуçне 6.000 çын тивет, малта пыракан крайсенђе вăл 3—4 пин çын çеç тивет, совет аппарађĕ хуçалăх строитĕлствин сатађисем йенне питпе сахал çавăрăннă.

Крайком пирĕн партти орканисатсисене куљттур фронтĕђе ĕçе тата пысăккăн вăйлатма, тĕрлĕреп ĕçсенђе халђ палăракан, тата сике сике тухса пыракан пуршуаçилле, тата сотсиал-темо кратла шухăшсене палăртакан теорисене пĕтерес тĕлĕшпе ним хĕрхенӳсĕр кĕрешме, оппортунисла теорисене тата оппортунисла ĕçсем тунине хирĕç кĕрешӳве вăйлатма хушрĕ.

Крайком рапођђисемпе колхоçнĕксенђен ђăвашсен çĕнĕ интелекентсии катăрне тăвассишĕн кĕрешессине пысăккăн сармалла, куљттур строиттĕлствине пур уђаскисенђе те партти шухăшĕ татăклăн вăйлатмалла, уйрăмăнах пиђете çирĕплетесси çине çавăрăнса пăхма хушрĕ. Пирĕн кăçал ђăваш ђĕлхине сарассине пурнăçа кĕртсе çитермелле; ђĕлхе ђухăн, аслă тата вăтам шкулсенђе ђăваш ђĕлхине вĕренме май килместь, текен „теорийе“ хирĕç кĕрешессине татăклăн сармалла. Пурне те хута вĕрентессипе хут пĕлменлĕхе пĕтерес ĕçре шкулсен ĕç ĕçпахалăхне, ликпунктăсенђе вĕренсе

тухакансемпе ĕçлессине лайăхлатасси шĕн, вĕсенђен пысăккăн ÿссе сарăлса пыракан промышлĕннăçпа сотсиалисăмла çĕнелес пыракан йалхуçалăхĕ вађђи квалификатсиллĕ катăрсем хатĕрлессишĕн кĕрешессине вирлĕн сарса пымалла.

Происвотсгвă тата управлени технĕккине çавăрса илес майпа технĕккăна вĕрентекен курссем, крушоксем уçмалла, технĕк, литтераттурине кăларассине вăйлатмалла. Шкул çулне çитмен ађасене вĕрентекен тата политтĕкпа çутăллăх уђрештенисене çитес вăхăтрах сотсиалисăм строиттĕлстви ыйтнă тăрăх çителĕклĕ уçмалла.

Тĕпри орканисатсисен ĕçĕсене районсене пайласа йертсе пырас майпа çĕнетессиневаскатмалла, районсене ĕçлекенсене çирĕплетмелле, йалсоведĕсен ĕçĕсене лайăхлатассишĕн, вĕсем тавра колхос активне, патраксемпе ђухăнсене çыпăçтараççишĕн çирĕппĕн ĕçлемелле, йалсо веђĕсен йала сотсиалисăмла çĕнетессишĕн, йалсенђе политтĕкпа хуçалăх кампанисене иртерессишĕн кĕрешессинђе орканисаттăрлă вырăнне пур майсемпе те хăпартмалла. Советпа хуçалăх аппаратне пÿрократла, ĕçе йурăхсăрласа

пыракан çынсенђен тасатас тĕлĕшпе кĕрешессине малашне те пĕр хавшатмасăр туса пымалла.

## Ђеретри хуçалăхпа политтĕк кампанисенђи сатађсем.

Тырпул хатĕрлес ĕç, халăх хушшинђи укçа-тенкĕ мопилисатсилесси, вăрман хатĕрлесси, тата ытти çакнашкал хуçалăхпа политтĕк кампанисенђе тăрăшсах ĕçлени палăрать. Ку ĕçĕн аван, ырлама тивĕç йенĕсем те пур, çав хушăрах пирĕн ку уђђаскăра хаљхи вăхăтра питĕ пысăк çитменлĕхсем, пысăк прорывсем пур. Халăх хушшинђи укçа-тенке пухас ĕç тӳсме çук нађар пырать, експăрт (йут патшалăха йамалли) таварсем хатĕрлесси калама çук сӳрĕк пырать, пахђа çимĕç хатĕрлесси йапăхранта йапăх, уйхирти ĕçе пуçтарса кĕртес тĕлĕшпе те ĕçсем нађарах, халех кĕрхи çĕртме туса хăварасси, çилос çителĕклĕ хатĕрлесе хăварайманни, вырса пăрахнă тырра пухса капансем туманни, çаксем пирĕн пысăк çитменлĕхсене палăртаççĕ. Иртнĕ çулсемпе танлаштарссасăн тырпул хатĕрлес ĕçре, пирĕн ӳсĕмсем пысăкки паллах. Анђах та ку ӳсĕмсем пурр ипе хăш пĕрисен пуçĕсем çавăрăн-

са та кайнă. Хăшпĕр районсем мăлтан пулнă çитĕнӳсемпе лăпланса ларнă.

Районсенђи хăшпĕр орканисатсисем тырпул хатĕрлес ĕçсем çине оппортунисла пăхса, хӳре вĕçĕнђе çапкаланса пыраççĕ. Кунпа цĕрлех уйрăм вăтамсем çине тĕрлĕрен тӳлевсем хунă ђух „сулахайалла“ пăрăннисем халĕ те палăраççĕ.

Крайри комитет çак прорывсем çине полђшевикла çивĕђлĕхпе çавăрăнса пăхрĕ. Пирĕн респуплĕкре пĕрĕмĕш çур çул хушшинђе сретствăсем мопилисатсилес ĕç çитĕлĕклĕ пыман тесе йышăнђĕ. Хирти тырпулсене пухса кĕртес ĕçри, кĕрхи ака ĕçĕнђи çитменлĕхсене татăклăнах парăнтарма, хирти тырпулсене пухса илессипе кĕраки кĕрхи çĕртме кампанийĕсене полђшевикла иртерме, тырпул, йĕтĕн-кантăр, аш-пăш, пахђа çимĕçсем тата ытти хатĕрлевсен планĕсене вăхăтра тата пĕтĕмĕшпех тултармашкăн, хуçалăхпа политтĕк кампанийĕсен хĕрӳллĕ сатанийĕсене пур йенђен те такăнтарма тăрăшакан кулаксем çине хайаррăн таптаса пымашкăн Крайком партти орканисатсийĕн пĕтĕм вăйне мопилисатсилеме хушрĕ.

Крайком сретствăсем мопилисатсилесси çине, ку ĕçе кайа йулса пынине пĕ-

терсе, палăртса хунă плансене пĕтĕмĕшпех тултарасси ҫане уйрăмăнах ҫавăрăнса пăхма хушрĕ.

Ҫакнашкалах пирĕн тата експăрт таварĕсем хатĕрлесси ҫине те питĕ тĕплĕн ҫавăрăнса пăхмалла, експăрт ваҙҙи хатĕрленĕ таварсене вăхăтра ăсатма тăрăшмалла.

## Пирĕн умра калама ҫук аслă ҫул выртать.

Йулташсем! Пирĕн умра калама ҫук аслă ҫул выртать.

Крайри уҙрештенисем пулăшнипе епĕр Ҙăваш респуплĕкĕн 2-мĕш пилĕк ҫуллăх планне тума тытăнтăмăр. Планра тĕллесе хунă тăрăх епĕр ҫитес ҫултах промышлĕннăҫа, тата тĕпҙевпе шырав ĕҫне 80—90 мĕлйун тенкĕ пама шутлатпăр. Слантсăсемпе фосфоритсем тăрăх шырав ĕҫне пĕтĕмпех туса ҫитерме, хаҙхи Вăрнарти савăтран 8 хут пысăк фосфорит савăҙĕ тума, каттĕрсемпе кимĕсем тăвакан савăта тăвас ĕҫсене сарса йама шутласа хунă, кусемсĕр пуҫне строиттĕлствăна кирлĕ маттериалсем тăвакан савăта тăвас ĕҫсене сарса йама шутласа хунă, кусемсĕр пуҫне строиттĕлствăна кирлĕ маттериалсем тăвакан

темиçе кикантсем, типокрафи т. ыт. тумалла пулаӗ.

Çитес пилӗкçуллӑхӑн пирвайхи çулӗнҫех епӗр Вӑрнарпа Йӗпреç слантсӑсем çинҫен 223 мӗлйун тенке ларакан калама çук пысӑк Енеркохимикӑмпината тума, „Поҫшекик“ савӑтӑн кирлӗ мар тухнӑ йулашкисенҫен хут тӑвакан савӑт, Куславккапа Сӗнтӗрвӑрри районсенҫе тсемӗнт савӑҫӗсем, лакпа кӑраскӑсем тӑвакан савӑтсем, çӗвӗç хапрӑкӗ, çӑкӑр савӑтҫӗ т. ыт. хапрӑк-савӑтсем тума тытӑнатпӑр.

Пирӗн умра „Аслӑ Атӑлӑн“ пысӑк ыйтӑвӗ, унӑн калама çук вӑйлӑ 5 китростантсисенҫен пӗри Ҫӑваш респуплӗкӗнҫе тӑвас пысӑк сатаҫ тӑраӗ. Çитес вӑхӑтсенҫех çак енерки никӗсӗ çинҫе тимӗр-тӑмӑр промышлӗннӑçне сарса йарас сатаҫ тухса тӑраӗ.

Малтан шутласа хунӑ тарӑх 2-мӗш пилӗкçуллӑхӑн вӗçӗ тӗлне Ҫӑваш респуплӗкӗнҫе пӗр интустрире ӗçлекен рапоҫҫисен шуҫӗ анҫах 70 пин çынна çитмелле.

Крайком—Енеркохимкӑмпинат, «Аслӑ Атӑл» т. ыт. ыйтусем, Ҫӑваш респуплӗкӗн условисенҫе, иккӗмӗш пилӗк çуллӑхӑн тӗп выраӑнӗнсеҫе тӑмалла тесе кӑтарт-

рĕ. Çак ыйтусем тăрăх епĕр тунă ĕçсене ырласа, Крайком çак ыйтусене тата çине тăрарах малалла илсе пыма хушрĕ. Крайпланăн, Крайри халăх хуçалăхĕн канашне, Патшалăх шыв транспăрт тытăмне, Ђулхула енеркостройне тата ăслăлăх уђрештенисене çак ĕçсене тĕпђесе хатĕрлес, вĕсене малалла йарас, вĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре кулленех пулăшса тăрассине йĕркелесе çитерме хушрĕ.

Йалхуçалăх тĕлĕшпе, ăна питĕ вăйлăн спетсиалисатсилени, унта електритсă вăйĕ кĕртнисĕр пуçне, йалхуçалăхнђе пилĕкçуллăхăн вĕçĕ тĕлне трактăрсен шутне 6 пине, халĕ пĕрерĕн анђах тĕл пулакан крусовиксен шутне 10 пине çитерме т. ыт. ĕçсем тума шутласа хунă. Ђăваш çĕршывĕн уйхирĕсене темиçе çĕр компайăнсем ĕçлесе тăмалла пулмалла.

Çак асăннă ђыхвăрсем хăйсемех Ђăваш çĕршывĕ иккĕмĕш пилĕк çуллăхăн вĕçĕ тĕлне хаљхипе танлаштарма май çук улшăнма тивĕçлине кăтартса параççĕ.

Çапла вара пирĕн партти орканисатси токлађĕ тăрăх ПСК(п)П Крайкомĕн пўровĕ йышăннă решшенисем пирĕншĕн ђăнахах та исторуллĕ ·пысăк вырăн йышăнса тăракан решшенисем пулса тăраç-

çĕ. Вĕсем хамăр респуплĕкре сотсиалисăм тăвас ĕçре малалла сарса йарас тĕлĕшпе пирĕн çийе калама çук пысăк сатаҫсем хураççĕ.

Анҫах çитĕнӳсемпе пĕрлех иртнĕ çулсенҫе пирĕн промышлĕннăçа сарассинҫе те, йалхуçалăхне сотсиалисăмла улăштарса çĕнетес ĕçре те тата опҫăпа куҫттурлăх строиттĕлствине малалла сарса пырассинҫе те пысăк прорывсем пулҫĕç.

Хуçалăхпа куҫттурлăх строиттĕлствинҫе тунă çитĕнӳсем Ҫăваш респуплĕкĕнҫи парторканисатси калама та çук пысăк ĕççсем туни çинҫен каласа параççĕ, анҫах çав вăхăтрах партйаҫҫейкăсем йертсе пырас ĕçре конкретлă патне çитеймерĕç. Партти ĕçĕнҫе тсеха, прикатăна, савăта конкретлă йертсе пырас ĕç питĕ наҫар пырат. Ĕç пахалăхĕ наҫар. Ҫылай йаҫҫейкăсем происвотствăра та, колхоссенҫе те массăсен хастарлăхне йертсе пыраймаççĕ. Ку тĕлĕшрен Тĕп комиттет, Крайком тата Опком панă кăтартусем пурнăçа кĕрсе çитеймен.

Технĕккăна алла çавăрса илес, хосрашҫота ĕçе кĕртес, ратсионалисатсилекен ĕççсене пурнăçа кĕртес, уравнилăвккăпа опеслиҫкăна пĕтерес тĕлĕшпе

ёҫсем питĕ вăрахăн пыраҫҫĕ. Рваҍҍĕсвăпа тата массăсем хыҫĕнҍен сĕтĕрĕнсе пырас йĕркепе кĕрешесси наҍар пыраť.

Хăш-хăш претприйаттисемпе йалти йаҍҍейккăсенҍе самокриттĕккăна хĕстернисем пур, клас сисĕмлĕхĕ мăкалнисем, савăтсенҍи йĕркесĕрлĕхсем ҫине пӳрне витĕр пăхнисем пур, промфинплана тултарассишĕн конкретлă кĕрешесси наҍар пыраť.

Акă мĕн пирки епĕр промфинплана тултарассинҍе, укҫа-тенке мопилисатсилессинҍе тата ытти ĕҫсенҍе уҫҫăн курăнса тăракан прорывсем пуррине куратпăр.

Прорывсене пирĕн кĕске вăхăтрах пĕтермелле, Крайком решшенийĕсем тавра ĕҫхалăхĕн йышлă массисене мопилисатсилемелле. Пирĕн хамăр ĕҫре айалтан пуҫласа ҫӳле ҫитиҍҍенех ĕҫпе йертсе пымалла, тумалла ĕҫе орканисатсилемелле, массăсен хастарлăхĕн пуҫĕнҍе пымалла, сотсиалисăмла ăмăртупа утарлă ĕҫлес йĕркене сарса йанипе хосрашҍота пурнăҫа кĕртмелле.

Ҫаксем пурте Тĕп комиттет, Крайком йышăннă решшенисем тата Сталин йулт. кăтартса панисем тăрăх йаҍейккăсен ĕҫне татăклăнах улăштарма хушаҫҫĕ. Массăллă происвотствăллă ĕҫре пирĕ

хушăра халиђђенех пĕр калăппа ĕçленисем пур. Массăллă ĕçе кашни уйрăм ĕçе кура туса пымалла, ăна ушкăнсенђе, уйрăм професçисенђе уйрăмăн туса пымалла, т. ыт. те. Ватă рапођђисемпе хăйсемпе, йалтан тин килнĕ çамрăк рапођђисемпе хăйсемпе, çамрăксемпе, хĕрарăмсемпе утарнĕксемпе т. ыттисемпе кашни ушкканпа хăйсемпе уйрăмăн ĕçлесе пымалла. Çĕрлехипе кăнтăрлахи çменăсене, прикатăсемпе тсехсене кашнине уйрăмăн массăллă ĕçпе çавăрса илмелле. Технĕккăна çавăрса илес тĕлĕшпе конкретлă ĕçсем сарса йамалла, происвотствăпа технĕккăна вĕренес ĕçе аслăн туса пымалла. Çак ыйтусем тăрăх Крайком конкретла решшенисем йышăнђĕ.

Ĕç вăйĕ выђанса тăнине пĕтерессичине уйрăмăнах хытă пăхас пулаť. Ăна тума ĕç укçи тӳленĕ çĕрте пĕртанлăха пĕтермелле, йертсе пыракан професçисене уйăрса мала кăлармалла, рапођђисен куђттурпа пурнăç условийĕсене лайăхлатмалла, т. ыт. те.

Çаксем пурте утарлă прикатăсене партти йенђен йертсе пырассине çӳлти карта хăпартма ыйтаççĕ. Комуниссен утарниђђĕствă йухăмĕнђе малта, пример-

лă происвотствĕннĕксем, тата массă орканисаттăрĕсем пулмалла.

Вăл партти йаӡейккисем кашни комунисăн ĕçĕсенех тĕрĕслейине ыйтат. Партти йаӡейккисен кашни комунисăн ĕçĕсене, партийĕтс сотсиалисăмлă ăмăртăва мĕнле хутшăнса ĕçленине, вăл прокулсем туни-туманнине, вăл ĕçсене йĕркелеме, тата ытти йенӡен те йепле сĕнӳсем панине, вăл кун каçиӡӡен мĕн ӡухлĕ ĕçленине, хосрашӡутшĕн мĕнле кĕрешнине, парттире тăманнисене утарнĕӡӡĕствă йухăмне, тата парттийе кĕртме мĕн таран тăрăшнине, технĕккăна алла илессишĕн мĕнле кĕрешнине, парттин тĕп çулйĕршĕн мĕнле кĕрешнине пурне те пĕлсе тăмалла.

Хосрашӡута пурнăçа кĕртесси пирĕн халӡӡенех йапăх пырат. Хосрашӡута пурнăçа кĕртесси, тата утарнĕӡӡĕстă йухăмне сарасси йапăх пынине пирĕн ӡас-ӡасах оппорттунисла сăлтавпа витме пăхаççĕ: уӡӡот ĕçĕ (хисепе илсе пырасси) наӡар пирĕн, теççĕ. Çавнашкал калаçнине хыттăн хирĕç тăрас пулат.

Претприйаттин шут (хисеп) аппаратĕнӡе шут тата отӡот ĕçĕсем йапăха кайнă пулсан, вара вăл ĕçсене станокран пуçлас пулат. Кашни рапоӡӡийех станокăн

происвотствăллă вăйне, вăл мĕн ҫухлĕ протукси ĕҫлесе кăларма пултарнине, ҫав протукси мĕн пек паха пулассине аван пĕлсе тăрать. Рапоҫҫи ҫапла пĕлнине пĕлсе орканисатсилеме те, станок, тсех, претприйатти ĕҫĕсене уҫҫота (хисепе) илсе тăрассине майлаштармалла.

Кашни станок патнех мĕн ҫухлĕ, тата йепле ĕҫленисене ҫырмалли хăмасем ҫакса хумалла, вара ҫавăнта кашнă кунах мĕн ҫухлĕ, тата йепле ĕҫленисене паллă туса хумалла: ĕҫ норми мĕнле, ҫменăра, талăкра, пилĕк кунлăхра, уйăхра мĕн ҫухлĕ протукси туса кăларнă.

Уҫҫот ĕҫне ҫапла йĕркеленийех сотсиалисăмлă ăмăртупа утарнĕҫҫĕствă мĕн панисене хисепе илессине майлаштарма май парать, вăл хосрашҫута пурнăҫа кĕртес ĕҫе ҫăмăллатать.

Хосрашҫута пурнăҫа кĕртессишĕн мĕнле кĕрешмеллине кăтарма епĕ парттин Тĕп комиттеҫĕн «Партийная работа в цехе» йатлă шурналăн 1-мĕш №-ĕнҫе ҫырнин пĕр тĕлне вуласа паман. Унта Мускаври Електросавăтри прикатăра хосрашҫута мĕнле пурнăҫа кĕртни ҫинҫен ҫырнă! Прикатăри рапоҫҫисем хăйсем ак ҫапла ҫыраҫҫĕ:

«Трансформаттăр пайĕ тсехăн III-мĕш кварттăл вађђи тунă происвотствă планĕн контроллĕ виçисене парассине тăсса тытса тăнă пулсассăн та, çапах та «Кошухсем хатĕрлекен прикатă» 1931-мĕш çулти ийунĕн 22-мĕшĕнђенпе хосрашђута куçрĕ, III-мĕш кварттăл прокрамне тултарма штурăмлама пуçларĕ.

Прикатăна татăклăнах хосрашђута куçарма хатĕрленес ĕçсене ак çапла тунă:

1) хамăрăн мĕн пур машшинсен вăйĕсене тĕрĕслесе вĕсене пурне те паспăртласа тухрăмăр;

2) III-мĕш кварттăлăн ÿстерсе тунă прокрамне пурнăçа кĕртме мéн ђухлĕ ĕç вăйĕ кирлине шутларăмăр;

3) пĕртанлатассинђен сыхланса, рапођђисене мĕн ђухлĕ ĕç укçи тÿлемеллине шутларăмăр;

4) кашни тетталĕн (пайăн) кађкку-ђатсине астуса, прикатă тăвакан таварсем (прикатă 13 теттађран (пайран) пуçласа 15 тетталђ таран тăвать) мĕн хака ларассине: шутларăмăр;

5) маттериалсем мĕн ђухлĕ пĕтерес сине: сĕрме, çутатма, тĕпрен тумалли, тата йаланхи ремонта мĕнђул расхут тухассине, пĕтĕм çав расхут тăрăх тата

наклатлă расхутсем (тсех расхуђĕсене, т. ыт. те хушасси) тĕплĕн шута илтĕмĕр;

6) туса пĕтермен происвотствă мĕн ђухлĕ пуррине шута илтĕмĕр. Çав йулашкисем трансформаттăр пайĕн пухкалттерийĕ „шутланă“ тăрăх тсех çинђе март уйăхĕнђенпех 140 пин тенкĕ шутланса тăраççĕ. Вăл укçа ăçтан тухса пулнине тсех халђђене пĕлеймесť, мĕншĕн тесен тсехра туса пĕтермен происвотствă çукпа пĕрех. Прикатă хосрашђота куçни кулленхи ĕçре акă мĕн пађĕ, хаљ ĕнтĕ кашни рапођђи хăйĕн мĕн тумаллине, мĕнле срукра, мĕнле хакпа, йепле маттериалтан тумаллине, расхут нормисем мĕнлине малтанах пĕлсе тăраť. Тсех каљккуљатсине прикатăна, кашни ĕçвырăнĕ патне çитерпĕренпе, тсех атминистратсийĕпе токăвăр тунăранпа прикатă харпăрхăй тĕллĕнлĕ хосрашђута никĕсе хурса мĕнле ĕçлемеллине татăклăн пĕлсе тăраť. Хаљ ĕнтĕ ĕç тухăçне тата çўле хăпартма, çапла вара пилĕкçуллăхăн виççĕмĕш, татăклă çулĕн прокрамне тата кĕскерех вăхăтра пурнăçа кĕртме кирлĕ майсем çителĕклĕ таранах пур. Хосрашђута пурнăçакĕртес çул çине пирĕн тсехра татах та палăр-

маллăх ҫăрмавсемпе ҫитменлĕхсемех йулҫĕҫ.

Станоксене план тăрăх, пăсăлса ĕҫрен тухиҫҫенех тӳрлетессине майлаштарман. Паспăртланă ҫухне станоксен вăйсене, вĕсем мĕн вăхăтра ĕҫлесе пĕтнине те тĕплĕнех шута илеймен».

Хосрашҫута пурнăҫа кĕртес ĕҫри ҫак оппăтпа пирĕн усă курас пулаť.

Претприйаттисенҫе пĕрпĕрин оппăҫĕсемпе паллашассине майлаштармалла. Пирĕн ку тĕлĕшпе ĕҫсем йапăх тăраҫҫĕ.

Пирĕн кăтартуллă ĕҫлекен уйрăм прикатăсем, тсехсем, партти йаҫейккисем, т. ыт. те пур. Анҫах вĕсен оппăҫĕсем хисепе илĕнмесĕрех йулаҫҫĕ.

Пĕрпĕрин оппăҫĕпе паллаштарас, технĕккăна алла илес, хосрашҫута пурнăҫа кĕртес, ĕҫе тĕплĕ пĕлсе йертсе пырас ĕҫре пиҫет пит пысăк вырăн йышăнса тăраť. Пирĕн пиҫет ку тĕлĕшпе тумалли ĕҫĕсене кирлĕ таранах сарса йарайман-ха. Пулнă ĕҫсене, прикатăсен, тсехсен, ҫменăсен, партти йаҫейккисен, уйрăм утарнĕксен ăнăҫуллă ĕҫĕсене сахал, ҫителĕксĕр ҫутатаҫҫĕ, пиҫетĕн ĕҫĕсене урăхлатас ҫĕнетес пулаť. Кашни тсехра, прикатăра, ҫвенора, ҫменăра ҫтена хаҫаҫĕсем, нумай тирашлă хаҫат-

сем кăлармалла, вĕсене кирлĕ таран йертсе пымалла тăвас пулаť.

Пирĕн парттин Тĕп Комитеҫĕ, тсехсенҫе, прикатăсенҫе партти ĕçĕсене урăхлатса çĕнетессине пит пахана хурса, „Партийная работа в цехе“ йатлă çĕнĕ шурнал кăларма пуçланă. Вăл шурнал происвотствăри татăклă ĕçсен орканисаттăрĕ пулаť. Çавăнпа та çав шурнал кашни йаҫейккăра, кашни тсехра, кашни прикатăра, кашни активис-рапоҫҫин пулмалла.

Сотсиалисăм пĕтĕм фронҫĕ сарлакăшпех наступлени туса пыни, шултра интустри тăвăллă хăватлăхсемпе ӳссе пыни, талкăшпе колхоса куçас никĕс çинҫе кулаксене класĕпе пĕтерсе пыни клас тăшманне уртарсах пире хирĕç тăратаť. Сотсиалисăм тăвакан çĕршыв çине империалиссем тапăнас хăрушăлăх кунран кунах ӳссе пыаť.

Çавăнпа та—клас тăшманне тата хытăрах çапар. Клас тăшманĕн парттири акĕнттурине—сылтăм, тата „сулахай“ оппортунисене вутпа хытăрах вĕтелер, кĕрешӳ вут-кăварĕн тĕп хăватне хаҫхи вăхăтра тĕп хăрушлăх пулса тăракан сылтăм сулăнҫăка хирĕç йарар. Натси ыйтăвĕнҫи сулăнҫăксене те: тĕп хăрушлăх пулса тăракан вырăс шовенисăмне,

выранти наттсионалисама, тата пур тёр-лё суланђаксемпе килёштерекенсемпе те тата вайларах кёрешер.

Крайри комиттетан полђшевикла решшенийёсем пирёншён ёç прокрамё пулмалла, унан тарах пирён Ђаваш респуплёкёнђи сотсиалисам строиттёлстствин ёçёсене сарса йамалла. Пётём ёçхалах массисене, пётём совет опђалахне Крайри комиттет решшенийёсем тавра мопилисатсилесе, пилёк çуллахан 3-мёш татакла çулан планёсене тултарса ирттерсе те йама, Крайком решшенисене ђи кёске вахатрах пурнаçа кёртме—малалла, çапаçава! (Хыттан ал çупаççё).

**Шупашкар орканисатсин хулари пухăвĕ Ç. П. Петров йулташ токлаҕĕ тăрăх авкустăн 26-мĕшĕнҕе йышăннă ресолҕутси**

## Партти Ҕăваш орканисатсин ĕçĕсем пирки Ҕулхула Крайкомĕ йышăннĕ решшенисем çинҕен.

Партти Крайком пўровĕ партти ҕăваш орканисатсин ĕçĕсем çинҕен йышăннă решшенисем тăрăх Ç. П. Петров йулташ тунă токлата сўтсе йавнă хыççăн, Парттин Шупашкар орканисатсин хулари пухăвĕ Крайком решшенисене пĕтĕмпех ырлаť.

Ҕăваш орканисатси партти тĕп çулйĕрĕшĕн, хаҕхи тапхăрта тĕп хăрушлăх пулакан сылтăм оппортунисăма хирĕç поҕшевикла кĕрешсе пынипе Елменĕн сылтăм оппортунисла теорипе пуршуаллă темократла теорине „Ҕăвашсем ўт-пў йенҕен те, ăспуç йенҕен те пĕтсе пыни" çинҕен пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкса, тĕп хăрушлăх пулакан аслăпатшалăх шовинисăмĕпе, вырăнти натсионалисăмпа, „сумлахай" пăрăнҕăкпа, пур йышши сулăн-

ђăксемпе те килĕшсе пыракансемпе татăклăн кĕрешсе пырса, партти Тĕпкомĕпе Крайком, тата Опкомпа унăн çекреттарĕ—Ç. П. Петров йул. йертсе пынипе ленинла натси политтĕкне çирĕппĕн тытса пынă, партти ретĕнђи пĕрлĕхлĕхпе итейлĕ пĕтĕçӳллĕхе çирĕплетнĕ, респуплĕкĕн еккономĕк, сотиаљнипе куљттурă строиттĕлтсвине сотсиалисăмла çĕнетес ĕçре ђылай пысăк çитĕнӳсем тунă. Партти орканисатси пĕтĕçӳллĕ ĕçленипе Ђăваш çĕршыв халăх акрарлă çĕршывран интустри çулĕпе вăйланса пыракан çул çине тăрать, тĕттĕм çĕршывран талкăшпех хут пĕлекен çĕршыв пулса тăрать.

Партти орканисатси йертсе пынипе сотсиалисăм строиттĕлствинђе çакăн пек пысăк çитĕнӳсем пирки никам та иккеленме пултараймасть,—пуху çакăн пек шухăшсем пуррине палăртать: оппортунисла аслăпатшалăхла йĕрĕнсе пăхакансем, пĕтерекен кăпиталисла класăн йулашки сийĕн—кулак класĕн инттересĕсене палăртакан шухăшсем, Партти ђăваш орканисатси рукковотствипе ђăваш çĕршывĕн хуçалăхпа политтĕклă ӳсĕмне йышăнман шухăшсем ку таранђђенех пурха (Флекĕнттăв çырăвĕ, А. Краснов прошшӳрĕ, т. ыт. те).

Çавăнпа та, Крайком решшенийĕнҫе те кăтартнă пек, орканисатсийе тата ытларах пĕтĕçтерес, унăн итейĕпе политтĕклă выранне хăпартас сатаҫсем,— кусем пĕтĕмпех партти тĕп çулйĕрĕнҫен тухса тăраççĕ, — партти орканисатсин ĕçĕнҫе ҫи тĕп вырăна йышăнса тăмалла. Елменĕвшҫĕнă йулашкисене хирĕç йалхуçалăхĕ коллективисатси никĕсĕ çинҫе тăнипе вăйланса пырассине хак паманни (Н. Ваççилйĕв, т. ыт.), сотсиалисăм сроиттĕлстви ваҫҫи натсионалсенҫен катăрсем хатĕрлессине хак паманни (Флекĕнттăв), йурăхсăр майсемпе комуниссен парттине варалама тăрăшни, Октăпĕр револҫутси ыйтăвĕпе ҫăваш автономине орканисатсилес ыйтусем çинҫен çутатнă ҫухне Комуниссен партти выранне контрреволҫутсиллĕ ессерсен парттине малти вырăна кăларса тăратма тăрăшни, çакна май вара—Комуниссен парттине ĕçхалăхĕ йенҫен ĕненмелле мар шухăшсем сарни (А. Краснов),— çаксене хирĕç пĕтĕм партти массипе совет опҫăлăхĕ йенҫен татăклă, хайар отпор памалла.

Партти крайкомĕ çитĕнӳсене палăртнипе пĕрлех оплăçри парторканисатси ĕçĕнҫе ҫылай пысăк çитменлĕхсемех

пуррине тĕрĕс кăтартаť: промышлĕннăçа кăпитал хывас тĕлĕшпе, Куславккапа Çĕмĕрле кăмпинаҫĕсене вăхăтра ĕçе йарас тĕлĕшпе ĕçсем çителĕклĕ пулман, пилĕк çуллăхăн татăклă виççĕмĕш çулĕнҫи промфинплана тултарассипе укçатенкĕ планне тултарас ĕçре прорывсем пулнă, ака планĕсене куљттурсем тăрăх тултарман, колхоссенҫе ĕçе орканисатсилессипе стелшҫĕнăна пурнăçа кĕртес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур, майпа ийуљ уйăхĕсем хушшинҫе коллективисатси хăвăртлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳ вăйсăрланнă, шкул строиттĕлстви çителĕклĕ пулса пымасť. т. ыт. те.

Çаксем пурте пĕрле партти орканисатсипе совет опҫăллăхĕ умне пĕтĕм шухăша, вăйа асăннă çитменлĕхсене; прорывсене хăвăртрах пĕтерессн тавра пухас, тата Ҫăваш респуплĕкĕн хуçалăхпа куљттур строиттĕлствин ҫылай тĕп ыйтăвĕсене татăклăн пурнăçа кĕртес сатаҫсене кăларса тăратаççĕ.

Коллективисатси хăвăртлăхĕсене, колхоссене орканисатсиллĕ ĕçсемпе хуçалăх ĕçĕсем йенҫен тĕреклетсе пыни тăрăх, стелшҫĕнăна ĕçе кĕртни, т. ыт. тăрăх та татăклăн вăйлатса йамалла, вара пирĕн 1932-мĕш çултан кайа йулмасăр,

талкăшпех колхоса куçассине, вăл никĕс çинҫе кулаксене класĕпех пĕтерессине те пурнăçа кĕртмелле, çав вăхăтрах вĕрсе хăпартнă ҫыхвăрсем хыççăн ҫупмалла мар, колхос строиттĕлствинҫе хак памасăр оппортунисла пăхнине ĕç хăй тĕллĕн пуçласа шанса ĕçленине хирĕç, «суллахайалла» пăрăнакансене, тĕрлĕ сулăнҫăксемпе килĕшекенсене хирĕç татăклăн кĕрешсе пымалла.

Çитес çултан кайа хăвармасăр пирĕн ҫи пысăк вырăн йышăнса тăракан выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетес ыйтăва пурнăçа кĕртмелле.

Промышлĕннăçа паракан кăпиталпа вăхăтра усă курмалла тăвассине партти орканисатси ĕçĕн тĕп вырăнне хумалла.

Партти орканисатсин тата çавăн пекех ҫăваш ҫĕлхине пурнăçа кĕртме тăвакан ĕçсене ҫăнахах пурнăçлантарасси, çĕнĕ вĕренӳ çулне тапратма хатĕрленесси, çитес кĕркуннерен пурне те 7 çулран сахал мар вĕрентмелле тăвасси, малалла политçут ĕçне вăйлатасси, т. ыт. çине те хытă пăхмалла.

Халăх укçи-тенкине ăнăçлă мопилисатсилени, йалхуçалăх протуксине илсе хатĕрлени, т. ыт. те пилĕк çуллăхăн виççĕмĕш татăклă çулĕн планĕсене пурнăçа

кĕртес ĕçре пит пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Вăл сатаӡсене пурнăçа кĕртме пĕтĕм ĕçсене çĕнĕлле йĕркелемелле, ӡăнахах поӆӡшевикла хăвăртлăхсем çине куçармалла.

Крайком решшени тăрăх пĕтĕм парттипе комсомол орканисатсине, пĕтĕм совет опӡăлăхне респуплĕкри промышлĕннăçпа пĕтĕм халăх хуçалăхне хывакан кăпиталпа вăхăтра, тата пĕтĕмпе усă курмалла тăвасси тавра; пилĕк çуллăхăн татăклă виççĕмеш çулăн промфинпланĕпе укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарасси тавра; тырпул пуçтарса кĕрес камппанийе, кĕракипе кĕрхи çĕртмене, тырпул хатĕрлес плана, пур политтĕклă хуçалăх камппанисене вăхăтра иртересси тавра мопилисатсилемелле; çапла тунипе вара пилĕк çуллăхăн йулашки 4-мĕш çулăн промфинпланне тултарма кирлĕ пур условисене хатĕрлесе хумалла пултăр.

Çавăнпа та пуху çак çывăх вăхăтрах партти, комсомол, совет, копператси, хуçалăх, т. ыт. йенĕпе те Крайком йышăннă решшенийе пурнăçа кĕртме сруксене кăтартса плансем тумалла тесе шутлаť.

Сталин йулташ кăтарса панисем тăрăх строиттĕлствăн пур пайĕсенӡе те ĕçе ӡăн-

нипе йертсе пырассине майлаштарса йа малла, технёке йарса илмелле, хуçалăх расҙутне пурнăçа кĕтрсе пымалла, танлаштарма тăнине, хуçасăрлăха, т. ыт, çавăн пекех çитменлĕхсене те хирĕç татăклă кĕрешсе пымалла.

Крайком решшеийĕсем Ҙăваш респуплĕкĕшĕн унăн сотсиалисăмлă ӳссе пыракан çулĕ çинҙе пит паха пулса тăраççĕ, малашне те çапла пулĕç. Çавăнпа та вăл решшенисемпĕ паллашас ĕçе сарса йамалла, вĕсене кашни комунисăн, комсомолĕсăн, рапоҙҙи колхоçнĕкĕн, пĕтĕм ĕççынниспен пĕлсе тăмалла, мĕншĕн тесен вăл решшенисем сотсиалисăм строитĕлствинҙе вĕсенҙен тапранса каймалласкерсем, пирĕн партти орканисатсине парттин тĕп çулйĕрне пурнăçа кĕртме тата таҙăрах перлештерекенскерсем пулаççĕ.

Цена 20 коп

С. П. ПЕТРОВ. О решениях бюро Нижегородского Краевого Комитета ВКП(б) о работе Чувашской парторганизации

Чувашское государственное издательство
Чебоксары, 1931